# Чăваш Енре те чĕрене ўте ытлашши касмасăрах операци тăваççĕ ● 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

21 (839) №, 2014, çу, 31

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Тăван тăварпа пиçнĕ. **2 стр.**

Улшуçсем енчĕке кĕрсех каяççĕ. **3 стр.**

Шупашкарта хваттерте... йĕке хўрепе пурăнакан та пур. **5 стр.**

Сĕлĕ – пурнăç эликсирĕ. **8 стр.**

Вĕçкĕн хĕрсене каччăсем ытларах кăмăллаççĕ. **9 стр.**

Йытă тав тума пĕлет. **10 стр.**

Унăн мăшăрне патшалăх ертўçи те кăмăллать. **11 стр.**



● АСЛĂ УШКĂНСЕНЧИ ШĂПĂРЛАНСЕМ ÇАК КУНСЕНЧЕ АЧА САЧĔПЕ СЫВ ПУЛЛАШАÇÇĔ.

# Ача-пăча – сак тулли

***Ачалăх – савăнăçлă та телейлĕ вăхăт. Тĕпренчĕкшĕн çывăх çыннисен юратăвĕ нимрен хаклă. Ашшĕ-амăшĕ ачи-пăчине тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерме тăрăшать.***

Юлашки çулсенче çĕр-шывра, çав шутра Чăваш Республикинче те, демографи лару-тăрăвĕ лайăхланчĕ. Хĕрарăмсем пĕр ача çуратнипе çырлахмаççĕ. Çавăнпах пирĕн тăрăхра йышлă çемье нумай. Вĕсене патшалăх та май пур таран пулăшать. Çĕр лаптăкĕпе амăшĕн капиталне илни çемьене ал-ура çавăрса яма май парать.

Ача куллинчен илемлĕрех сасă пур-ши çĕр çинче? Вăл лăпкăлăх кўрет, ашшĕ-амăшне вăй-хал парса тăрать.

Сывă пурнăç йĕркине пăхăнса çитĕнекен тĕпренчĕкĕн малашлăхĕ çутă. Кăçалхи Ачасене хўтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун чылайăшĕн асĕнче сывлăх уявне хутшăннипе юлĕ. Ыран ачапăча Шупашкарти Хĕрлĕ тўреме зарядкăна пуçтарăнĕ. Флэшмоба паллă телеертўçĕ, ачасем килĕштерекен Беріляка ертсе пырĕ. Ас тăватăр-и, пирĕн ывăл-хĕре вулама та, çырма та, акăлчанла калаçма та вĕрентрĕ вăл. Ун витĕмĕпех шăпăрлансем тĕрлĕ япала ăсталама хăнăхрĕç. Берилякăна инструкторсем, волонтерсем пулăшĕç. Малтанлăха палăртнă тăрăх – ку мероприятие 10 пине яхăн çын хутшăнĕ. Апла ачасен те рекордсен Гиннесс кĕнекине лекес шанăç пур.

Тўпере яланах янкăр хĕвел çутаттăр, çăра пĕлĕт ачасен пуласлăхне ан хуплатăр. Çĕр çинче тăнăçлăх хуçалантăрччĕ...

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăн ўкерчĕкĕ.

> *Ырă кўршĕ – ял илемĕ.*
>
> **Каларăш.**

**Хаклă тăванăм, вулаканăм!**

**Ĕçрен пушаннă самантра почтальонпа тĕл пулмашкăн ан мансам. Эсĕ «Чăваш хĕрарăмĕпе» малашне те çыхăнăва татмасса шанатпăр. Çитес çур çуллăхри çырăнтару хакĕ: 340,44 тенкĕ.**



## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 31.05 | + 23 | + 12 |
| 01.06 | + 25 | + 13 |
| 02.06 | + 27 | + 15 |
| 03.06 | + 29 | + 17 |
| 04.06 | + 28 | + 16 |
| 05.06 | + 29 | + 20 |
| 06.06 | + 31 | + 20 |

Рита АРТИ сăн ўкерчĕкĕ.

ЙЫШЛĂ ÇЕМЬЕ

# Тăван тăварпа пиçнĕ



Нумай ача çуратакан хĕрарăм ватăлмасть, çамрăк курăнать теççĕ. Ахальтен каламаççĕ пуль çав. Пилĕк ачаллă амăшне çемьери аслă хĕрĕ вырăнне йышăнтăм малтан. Хĕрĕх çултан каçнине тем тесен те ĕненес килмерĕ. Пысăк Улаксарта пурăнакан Васильевсен – виçĕ хĕрпе икĕ ывăл. Чи асли Кристина 16 çулта, кĕçĕнни Милена шкула каяймасть-ха. Виççĕшĕ килтехчĕ, Аньăпа Алёша шкултан çитейменччĕ. Эпир килнĕ çĕре пĕчĕк хĕрсем урай çуса тухма та ĕлкĕрнĕ. Ачисем ĕç патне туртăннишĕн, кирек мĕн хушсан та ÿркенменшĕн тем пекех хĕпĕртет амăшĕ.

– Камшăн мĕнле пуль, пирĕншĕн вара пилĕк ача нумай пек туйăнмасть. Пысăк çемье ĕçре те, сĕтел хушшинче те илемлĕ. Ÿссен пĕрпĕрне пулăшĕç. Тăван тăварпа пиçнĕ. Пĕр хуранри яшка-пăтă пурин валли те çитет. Çĕтĕк, выçă çÿретместпĕр. Эпир пĕчĕк чухне килсерен пилĕк-ултă ача пулнă, – тет хĕрарăм.

Васильевсем пысăк çуртра пурăнаççĕ. Пиллĕкмĕшĕ çуралнă тĕле хăпартса лартма ĕлкĕрнĕ ăна. Патшалăх тавăрса памалла мар субсиди парса пулăшнă вĕсене, 165 пин тенкĕ самаях курăмлă пулнă вĕсемшĕн ун чухне. Ашшĕпе амăшĕ пĕчĕкренех ĕçе явăçтараççĕ шăпăрлансене. Куршанакĕ тахçанах пурне те çыпăçнă. Пĕчĕккĕллех вырăх-чĕрлĕх пăхма, пахчара утă пуçтарма пулăшаççĕ. Хĕр ачасем урай çăваççĕ, апат пĕçереççĕ. Кашнийĕнех юратнă ĕçĕ пур. Сăмахран, вун тăватă çулти Аня çÿç тирпейлеме, тĕрлĕ çивĕт тума ăста. Ÿссен парикмахер пуласшăн вăл. Шухăшĕ унччен çĕр тĕрлĕ те улшăнĕ-ха хĕр ачан, çапах мал ĕмĕтлĕ пулни паха. Кристина чечексемсĕр пурăнаймасть. Пÿрт умĕнчи пахчара темĕн тĕрлине те çитĕнтерет. Килте хăтлăх, тирпей-илем хуçаланнине юратать хĕр упраç. Ывăлĕсем Сашăпа Алеша ашшĕнчен ниçта та юлмаççĕ.

– Картишĕнче пĕтĕмпе тăхăр чун, икĕ ĕне, пăрусем... Вырăх усраса пăртак тупăш илес килет. Çавăнпа та ĕçĕ пирĕн кил-çуртра пурин валли те çитет, – тет кил хуçи арăмĕ.

Николай тата Галина Васильевсем «Сормовский» хуçалăхра тăрăшаççĕ. Пĕр-пĕрне хисеплекен, çур сăмахран ăнланакан мăшăр малашлăх пирки ĕмĕтленет. Ачисем çитĕнсе пынине кура Пысăк Улаксарта пĕчĕк йывăç çурт туяннă. Унти хуçалăха та тирпейлесе тăраççĕ, çĕрĕ çинче утă туса илеççĕ. Амăшĕн капиталĕпе те тахçанах усă курнă, Канашра пÿлĕм илнĕ.

Ялти хĕрарăмăн пĕрмаях ĕç нумай. Галина ир-ирех тăрать те çур çĕр иртмесĕр те куç хупаймасть. Хĕллесенче алса-чăлха çыхать. Халь пахчара ĕç туллиех, унсăр пуçне сĕт-çăвне тирпейлемелле, утă çулса типĕтмелле. Çав вăхăтрах хаçат-журнал та вулама юратать маттур хĕрарăм. Çитес çур çуллăх валли пĕр пин тенкĕлĕх тĕрлĕ кăларăм, çав шутрах – «Чăваш хĕрарăмне», çырăнчĕ Галина. Ачисене те вуласа аталанма, ĕçе юратма, пĕрмай ырри патне туртăнма хистет амăшĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Канаш районĕ.
Автор сăн ÿкерчĕкĕ.

ÇĔР ЫЙТĂВĔ

# Шутлă лаптăк

Пĕлтĕрхи чÿк уйăхĕнче Шупашкарти Асоновсен килĕнче йыш хушăнчĕ. Ашшĕне амăшĕ, кукамăшĕпе асламăшĕ, мăн акăшĕсем виçĕ пăхаттире юратса çитĕнтереççĕ. Çулталăк вĕçĕнче çемье çĕр лаптăкĕ илмешкĕн черете тăчĕ. Пилĕк уйăхранах Муркаш районĕнчи Катькас çумĕнче çĕр сĕннĕ вĕсене. Ял хуларан 30 çухрăмра вырнаçнă. Сăмах май, ку вырăнта 500 çемье валли лаптăк уйăрма палăртнă. «Унта кайса çÿреме машина та, пÿрт çĕклеме укça та çук пирĕн, çавăнпах илме килĕшмерĕмĕр», – ăнлантараççĕ Асоновсем. Çак мăшăрăн пĕлĕшĕсенех ăннă тесен те юрать. Вĕсен çывăх тăванĕсем – шăпах çав тăрăхран. Пысăк çемье çакăнта çĕр лаптăкĕ панăшăн савăннă çеç. Асоновсен вара черетре малтан хыçала куçнă...

Командировкăна тухсан та вырăнти пуçлăхсене çак ыйту тавра калаçтаратпăр. Район çыннисенчен чылайăшĕ центрта çĕр илме палăртнă иккен. Анчах пурин кăмăлне тивĕçтереймĕн. Унти лаптăк та шутлă.

Пĕлтĕр пĕр конференцире нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕ тивĕçекен çĕре сутма ирĕк памашкăн ыйтнăччĕ. Вĕсен шухăшĕпе – çав укçапа пурăнмалли условисене лайăхлатма май пулĕ. Чиновниксем çакăн тавра шухăшласа пăхма шантарчĕç... Асоновсем те çав укçа çумне федерации тата республикăн амăшĕн капиталне хушса уйрăм кĕтес туянĕччĕç.

Паян республикăри нумай ачаллă 4435 çемье çĕр лаптăкĕ илмешкĕн черетре тăрать. Унашкаллисем Шупашкар /1499/, Çĕнĕ Шупашкар /430/ хулисенче тата Шупашкар районĕнче /467/ уйрăмах йышлă. 2011 çултанпа 2388-шне ятарлă сертификат панă ĕнтĕ. Вĕсенчен 1503-шĕ çак лаптăкра çуртйĕр çавăрасшăн, 45-шĕ дача çĕклесшĕн. Аса илтеретĕп, «Чăваш Республикинче нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕ парасси çинчен» саккуна кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшÿллĕн йышлă çемье черете тăнă чухне харпăр хăй хуçалăхне йĕркелемелли лаптăк ăçта пуласси не – халăх пурăнакан вырăнта е унăн тулашĕнче – суйлама пултарать. Çавна май 484 çемье ăна хăйсем пурăнакан çĕрте, 356-шĕ уйра илнĕ.

Хальлĕхе йышлă çемьесене 266,7 гектар çĕр панă. Кĕçех 3043 лаптăк /347 гектар/ хуçисем те тупăнĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ПУШАР ХĂРУШСĂРЛĂХĔ

# Вăрманта кăвайт чĕртме юрамасть

Çулталăк пуçланнăранпа республикăри 2 вăрманта пушар тухнă. Улатăр районĕнчи «Сăрçи» патшалăх заповедникĕнче вут-çулăм алхасни пирки хаçатра çырнăччĕ. Нумаях пулмасть Шупашкар вăрман хуçалăхне те «хĕрлĕ автан» шар кăтартнă. Икĕ пушар 10 ытла гектар лаптăка сиен кÿнĕ.

Вăрманта пушар нумай чухне çын айăпĕпе тухнине асра тытмалла. Пирус тĕпĕ пăрахса хăварни е кăвайт сÿнтерменни инкек патне илсе çитерет. Шăрăхра кĕленче е кантăк ванчăкĕ те çулăм кăларма пултарать. Çакна шута илсе çынсене вăрмана кĕме чарнă. Пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркине пăхăнманнисен административлă е уголовлă явап тытма тивĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

АСĂРХАР

# Паха вăрлăх - лайăх тухăç

Çулсерен республикăна ытти регионтан ял хуçалăх культурисен вăрлăхне, улма-çырла тĕммине чылай кÿрсе килеççĕ. Паллах, вĕсемпе пĕрле чир-чĕр е сиенлĕ хурт-кăпшанкă килес хăрушлăх пур. Пĕлтĕр, сăмахран, Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕсем чечек, пахча çимĕç, нумай çул ÿсекен культурăсен вăрлăхне, тĕм сутса услам тăвакан 96 çын ĕç-хĕлне тĕрĕсленĕ те вĕсем пурте саккуна пăсни палăрнă. Вĕсене административлă майпа явап тыттарма тивнĕ: Патшалăхăн селекци çитĕнĕвĕсен реестрне кĕртмен сортсен вăрлăхне сутнăшăн /71 тĕслĕх/, сорт тата шăтаслăх пахалăхне çирĕплетекен документсемсĕр хутаççене сутлăха кăларнăшăн /25 тĕслĕх/.

Вăрлăх тĕрĕслевĕ енĕпе юридици вăйĕнчи 81 çынна тата 61 усламçа тĕрĕсленĕ май вара йĕркене пăснă 168 тĕслĕх çиеле тухнă: акнă чухне – 46 процент, сутнă чухне – 111 процент, упранă чухне – 6 процент, документсем тĕлĕшпе – 4 процент.

Пай пуçлăхĕ З.Фомичева каланă тăрăх, пĕтĕмпе 1435 парти инспекторсен аллине лекнĕ, çав шутран 387 партине Патшалăх реестрне кĕртмен иккен, 204 парти тĕлĕшпе тивĕçлĕ документсем пулман.

Пахчара çăвĕпех ĕçлени сая ан кайтăр тесен паха вăрлăх туянни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та специалистсем ăна ятарлă лавккасенче туянма сĕнеççĕ. Унта сутуçăсем тухăç мĕнле пуласси, сăтăрçăсенчен хÿтĕленмелли меслетсем пирки ăнлантарса параççĕ. Вĕсен вăл е ку парти тĕлĕшпе сертификат /свидетельство/ пулмалла. Вăл – тавар хăрушсăрлăхĕн тата пахалăхĕн гаранчĕ. Документра культура ятне, унăн сортне, парти номерне тата ытти информацие кăтартмалла. Енчен те сертификатра /свидетельствăра/ çырни хутаç çинчипе пĕр килсен – вăрлăх пахалăхлă.

Вăрлăх хутаççисем çинче тавар кăларакан ятне, адресне тата телефонне; культура, сорт ятне; стандарт паллине /ТУ/, парти номерне; йывăрăшне /грамм/ е шутне; усă курма юрăхлăх вăхăтне кăтартма кирлĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, сортсене Патшалăх реестрĕнче шута илнипе кăсăкланăр: Интернетри адресĕ - www.gossort.com.

Виççĕмĕшĕнчен, пахчана сăтăрçăсем илсе килес мар тесен фитосанитари документчĕсем пуррине ыйтмалла.

Республикăра çĕр улмин ылтăн нематоди сарăлни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Ют çĕртен те мар, хамăр патри вăрлăххранах ăна пĕли-пĕлми çынран туянса, шар курас хăрушлăх пур. Пахчана урăх сорт кĕртичен лабораторире тĕрĕслеттерни те пăсмĕ. Пĕр-пĕр амак вăй илсен хăтăлма çăмăл мар вĕт.

Управлени специалисчĕсем хутаççенче сăтăрçă курăксен вăрлăхĕсене кашни çул тенĕ пекех тупаççĕ. Повилика, амбрози, ипомея текен мурсем тупнă партисене çунтараççĕ.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**управлени пресс-секретарĕ.**

ÇАКЛАТНĂ ТА... ÇАКЛАННĂ

# Пулли те, штрафĕ те пысăк

Çу уйăхĕн 10-мĕшĕнче Шупашкар районĕнче профилактика мероприятийĕсем иртнĕ. Оперативниксем пысăк – 13 килограмм /!/ – таякан пулла çаклатнă арçынна тытса чарнă. Унран резина кимĕ, тетел тата хайхи пулла туртса илнĕ.

Асăннă тĕслĕхпе уголовлă ĕç пуçарнă – пулла саккунсăр майпа тытнăшăн. Браконьера çирĕп айăплав кĕтет: е 300 пин тенкĕ штраф, е 6 уйăхлăха ирĕксĕр хăварма пултараççĕ.

ЧР ШĔМĔ аса илтерет – вăлча сапнă вăхăтра пулă тытма юрамасть. Питех чăтăмĕ çитменнисем шыв чĕр чунне вăлтапа тата ăманпа улталамашкăн хăтланма пултараççĕ, анчах каллех – вăлча сапнă вырăнтан аякра кăна.

**М.МИХАЙЛОВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Енчĕкех кĕрсе каяççĕ

Алина ИЗМАН

Страхлакан пĕр организацирен шăнкăравларĕç: кĕçĕн класра вĕренекен хĕрĕм вĕсем йĕркеленĕ конкурсра сертификата тивĕçнĕ-мĕн, ăна пырса илме чĕнеççĕ. Ачашăн хĕпĕртенĕскер килĕшрĕм, анчах ĕçрен тухса утма ниепле те май килмерĕ. Менеджер кунсеренех шăнкăравларĕ, тĕл пулма ыйтрĕ. «Хăвăрах шкула кайса парсамăр, темĕнле пысăк шайра ирттерекен конкурс çĕнтерÿçисене те награда хăех шыраса тупать те сирĕн пата вара пырса илмелле темшĕн. Ачана линейкăра, халăх умĕнче чыслани çын урлă парса янинчен чылай лайăхрах-çке», – тетĕп хайхискерне. «Сирĕн вăхăт çук тăк хамах пыратăп», – çине тăчĕ менеджер.

Кĕçех пÿлĕме çамрăк хĕрарăм кĕчĕ. Хайхи сертификата /унашкаллине кирек кам та хатĕрлĕ: ахаль хута пичетлесе алă пус, пичет çап – пулнă та, файл хутаçа чиксе хăть/ кăларса хучĕ, ытти документ туртса кăларчĕ те ыйтусем пама тытăнчĕ. Пирĕн çемье тупăшĕпе, упăшка мĕн чухлĕ ĕçлесе илнипе, уйăхсерен мĕн чухлĕ укça тăкакланипе кăсăкланчĕ. Пĕрремĕш хут курнă çынна мĕншĕн йăлтах çаксене уçса памалла тет-ха? Тĕрĕссипе, унпа калаçмашкăн вăхăт та, кăмăл та çукчĕ. Манăн хуравсенчен çакна сисмерĕ-ши вăл? Менеджер хăпма пĕлмерĕ, страхлас енĕпе пулăшу сĕнчĕ. Тĕлĕнмелле вăхăтра пурăнатпăр эпир – пурте укçа сĕнеççĕ: банксем те, кивçен паракан организацисем те... Кусем те çын сывлăхĕпе инкек пулсан 200 пин тенкĕ пама шантараççĕ, синкере çакланмасан укçа хуçи патне каялла таврăнать-мĕн. Анчах малтан вĕсен организацине уйăхсерен икĕ пин тенкĕ ытла укçа хурса тăмалла... «Сирĕн халĕ çумра мĕн чухлĕ укçа пур?» – ыйтать хайхи менеджер. Кай, енчĕке хăех кĕрсе каять ку! Кăçал хĕлле пĕлĕшĕмĕн ачи конькипе ярăнма кайсан ÿкнипе малти икĕ шăлне катса пăрахнине каласа кăтартатăп хайхине. Халĕ те больница тăрăх çÿреççĕ, чылай укçа тăкакларĕç. Амăшĕ ачине 30 пин тенкĕлĕх страхланă пулин те пĕр пус укçа та илеймерĕ.

Менеджер çаплах хăпма шухăшламарĕ те. Вăл каланă тăрăх – 35-рен иртнĕ хыççăн вилме хатĕрленме тытăнмалла, хăйне пытармалăх укçа пухса пымалла. /Шăпах çав кунсенче хам 35 тултарнăччĕ те ку, чăнах та, мана валлиех ĕнтĕ/. «Икĕ çултан – вилсен çавăн чухлĕ укçа тухать, висĕ çул хыççăн – кун чухлĕ», – таблицăпа усă курсах ăнлантарать агент. «Кирлĕ пулсан Интернетра шыраса тупатăп», – итлес килмиех пулнипе хуравлатăп ăна. Ку информаци ниçта та çук, çавăнпа та страхлакан служба ĕçченĕ мана каласа кăтартмашкăн хăй ятарласа килнĕ иккен.

Çăкăр-тăвар хире-хирĕç, эпĕ те ăна пирĕн хаçатра пĕлтерÿ пама сĕнетĕп. Юрать-ха хĕрарăмĕ – чăваш. «Тираж – 9 пин ытла, вăт хăвăр пирки çырса кăтартăр пирĕн хаçатра, – çине тăтăм хам та. – Чимĕр-ха, эсир «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене вулатăр-и? Атьăр сире «Чăваш хĕрарăмĕ» çыратартăп». Ытти хаçат ятне, хакне те асăнтăм. «Çур çул хаçат илсе тăрассишĕн те 340 тенкĕ кăларса хурас килмест сирĕн авă, хăвăр манран уйăхсерен 2 пин тенкĕ ытла укçа куçарма ыйтатăр», – тетĕп менеджер хирĕçленине кура. Эпĕ урлă-пирлĕ калаçни ăна килĕшмерĕ. Ĕç тухманнине кура вăл та кăнттамлăхне хута ячĕ. «Ан манăр – эпир яланах вăхăтлă килетпĕр. Ĕçре пĕр тĕслĕх пулнăччĕ: арçын хăйĕн пурнăçне страхлама килĕшрĕ, унпа тепĕр кун тĕл пулма калаçса татăлтăмăр. Шăнкăравларăм та телефона ывăлĕ тытрĕ – ашшĕ вилнĕ иккен», – агент çапла калани чикан майри ылханнă евĕрех илтĕнчĕ...

Унтан темиçе пĕлĕшĕмĕн телефон номерне ыйтрĕ. Манăн тăшмансем çук вара... Пĕр номер те памарăм.

Укçа-тенкĕпе çыхăннă тĕллевĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ачасене хушша-хуппа кĕртни тарăхтарчĕ. Тĕрĕссипе, страхлакан организацие вĕсен ÿкерчĕкĕсем ашшĕ-амăшĕнчен укçа сăптăрма çул хывма кăна кирлĕ. Ăна-кăна чухлайман тĕпренчĕксем  вара урок тума пăрахсах конкурс валли ÿкерчĕк ăсталама лараççĕ.

«Укçа кăларса тыттариччен мĕнле организаципе çыхланнине тĕрĕслес йăла пур, сирĕн çинчен çынсем мĕн çырнине форумра  вулар-ха», – менеджер умĕнчех компьютер умне кĕрсе лартăм. «Акă курăр, куç тĕлне лекнĕ пĕрремĕш сайтрах çапла çырнă: «финанс пирамиди», «укçа сумалли мел», «ултавçăсем»... Татах калас-и?« «Апла тăк хамăн пусăхса яратăп сирĕн пата», – тарăхрĕ менеджер, пай пуслăхĕ патне шăнкăравларĕ. Э-э çук, кирлĕ мар... Тепĕр тесен – килтĕр-иç. Ĕçне йĕркеллĕ пурнăçлама пĕлмен сотрудникĕ пирки каласа кăтартăп ăна.

Çур кун та иртмерĕ, пÿлĕме пай пуслăхĕ хăй çитсе тăчĕ. Хăйсен ĕçченĕшĕн каçару ыйтрĕ, лешĕ çĕнĕ çын пулнă иккен. Юрать-ха ку «кĕмĕл» сăптăрас тесе аптăратмарĕ...

КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# Кремле – ыр кăмăллăх концертне

Çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче республикăри Хĕрарăмсен канашĕн хастарĕсем Кремльте иртнĕ «Вырăс музыкин шедеврĕсем» ыр кăмăллăх концертне хутшăннă. Ăна Мускав тата Пĕтĕм Раççей патриархĕ Кирилл пил панипе Славянсен çырулăхĕпе культурин кунне халалланă. Çакнашкал мероприятие Русăн пĕчĕк хулисенчи культурăпа йăласене чĕртес енĕпе ĕçлекен ырă кăмăллăх фончĕ йĕркеленĕ. Концерт курма хĕрĕх ытла делегаци килсе çитнĕ.

Палăртмалла, 2013 çулта асăннă фонд РФ Президенчĕн грантне тивĕçнĕ. Çавна май пĕчĕк хуласенче пурăнакансем вырăс классикипе çывăхрах паллашаççĕ. Сăмах май, концерта тÿлевсĕрех кĕреççĕ. Истори палăкĕсене упраса хăварас, культурăна халăхра сарас, хамăр çĕр-шывăн çитĕнĕвĕсемпе мăнаçланас, ăс-хакăл хаклăхне хисеплеме вĕрентес енĕпе те чылай ĕç пурнăçлать фонд.

Чăваш Ен хĕрарăмĕсем Раççей тĕп хулинчи паллă вырăнсене курса çÿренĕ.

«Концерт 3 сехет çурă пычĕ. Вăхăт иртни сисĕнмерĕ те... Чиркÿ юррисем мана çав тери килĕшрĕç. Вĕсем кĕлĕ евĕр илтĕнчĕç. Культура çулталăкĕнче тĕлĕнмелле çак каç пирĕншĕн чаплă парне пулчĕ», – аса илĕве пайларĕ Çĕмĕрлери хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи Елена Голованова.

Раççей халăх артисчĕ, Пысăк театрăн солисчĕ Владимир Маторин, вăлах Русăн пĕчĕк хулисенчи культурăпа йăлайĕркене чĕртес енĕпе ĕçлекен ырă кăмăллăх фончĕн председателĕ, уявăн тĕп сăнарне çаврăннă. Вăл вырăс, чикĕ леш енчи композиторсен вокал лирикипе тĕнче шайĕнчи чи лайăх сценăсем çинче тухать, унăн концерчĕсем яланах ăнăçлă иртеççĕ. Çавăн пекех РФ Президенчĕн оркестрĕн, И.Осипов ячĕллĕ Раççей халăх инструменчĕсен Наци академийĕн оркестрĕн, А.Юрлов ячĕллĕ Раççей Патшалăх академийĕн хор капеллин, Беларуç Республикинчи Могилев хулинчен килнĕ халăх инструменчĕсемпе калакан çамрăксен оркестрĕн пултарулăхĕ хĕрарăмсене тыткăнланă. Классика кĕвви, халăх, православи чиркĕвĕн юррисем, романссем вĕсен асĕнче чылайлăха юлĕç.

Лиана ВАНИНА.

КИНОФЕСТИВАЛЬ

# Куракансен кăмăлне тупнисем



Республикăра йĕркеленĕ Пĕтĕм тĕнчери VII кинофестиваль вĕçленчĕ. Çĕнтерÿçĕсене К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче чысларĕç. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çĕнĕ ĕçсем илсе килнĕшĕн тата тахçан киленсе пăхнă фильмсене тепĕр хут кăтартнăшăн фестивале хутшăнакансене тав турĕ. Чăваш халăхĕ урăх наци çыннисемпе авалтанах туслă пурăннине палăртрĕ. Çавнашкалах кинофильм тавра курăма аталантарма, кăмăл-сипет никĕсне çирĕплетме пулăшни çинче чарăнса тăчĕ вăл.

Гражданлăха тата патриотлăха сăнлакан фильмсем ÿкернĕшĕн Чăваш Ен Пуçлăхĕн ятарлă парнине «Волчий след в истории России» ĕçшĕн Мария Исакова тивĕçрĕ.

Кăçал жюри членĕсем наци киностудийĕсен ĕçĕсене тата илемлĕ фильмсене уйрăммăн хак пани çинчен çырнăччĕ. Камсем-ха вĕсем, куракансен кăмăлне тупнисем?

Наци фильмĕсен конкурсĕнче «Булаг» кинокартинăна /режиссерĕ Солбон Лыгденов/ халăх патне çитерни Дмитрий Ильков оператор ĕçне чи лайăх пурнăçланăшăн хисепе тивĕçрĕ. Жюри шухăшĕпе, «Семенчик» ĕç /Марина Калинина, Якут Республики/ – чи лайăх фильм. «Илемлĕ фильмăн чи лайăх сценарийĕ» номинацире «Горький мед» /Айнур Аскаров/ мала тухрĕ. «Актерăн чи лайăх ĕçĕ» ята «Подснежник» фильмра ÿкерĕннĕ Геннадий Турантаев çĕнсе илчĕ. Çак кинокартинăна халăх патне çитернĕ Сергей Потапов «Чи лайăх режиссура» номинацире те палăрчĕ. «Белый день» фильм операторне, çут тĕнчерен уйрăлнă Иннокентий Амосова, жюри дипломне пачĕç. «Нарспи» фильм режиссерне Андрей Васильева жюри ятарлă парнепе хавхалантарчĕ.

Илемлĕ фильмсен конкурсĕн пĕтĕмлетĕвĕ çакнашкал:

«Куракансем килĕштернĕ фильм» ята «Полет. Три дня после катастрофы» /Арсений Гончуков/ çĕнсе илчĕ. Таисия Игуменцевăн «Отдать концы» ĕçĕ МИХсен парнине тивĕçрĕ. Фестивалĕн чи лайăх режиссерĕ – Дмитрий Тюрин /«Жажда», Раççей/. Хĕрарăм сăнарне чи лайăх калăпланăшăн Нилюфар Файзиевăна /Лариса Садилован «Она» фильмĕ/ чысларĕç. Арçын рольне чи лайăх вылянăшăн тÿрех тăватă çынна – Владимир Меньшова, Евгений Стычкина, Алексей Маслодудова, Сергей Овчинникова – палăртса хăварчĕç. Вĕсем Ирина Волковăн «Диалоги» фильмĕнче ÿкерĕннĕ. «Жажда» ĕçре вылянă Игорь Лях – иккĕмĕш планри роле чи лайăх калăплакан. «Ученик» кинокартина Гран-прие тивĕçрĕ. Ăна Финлянди режиссерĕ Ульрика Бенгтс пысăк экран çине кăларнă. Кăçал Интернет-блогерсем те хăйсене ятăн парне хатĕрлерĕç. Вĕсем «Жажда» фильма килĕштернĕ. Çавнашкалах «Диалоги» ĕçĕн сценарисчĕсене Константин Стешикпа Ирина Волковăна çитекенни пулман. «Стыд» фильмăн операторĕ Юрий Михайлишин та – çĕнтерÿçĕсен йышĕнче. Ĕçе Юсуп Разыков ÿкернĕ.

«Деливеранс» /Сергей Кузнецов/ тата «Летящие по ветру листья» /Валерий Харченко/ фильмсем те айккинче юлмарĕç. Вĕсем те жюри дипломне тивĕçрĕç.

Шупашкар кинофестивалĕн программа директорне Сергей Лаврентьева «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят пани куракансен асĕнче юлчĕ.

Çапах кинофестиваль вăхăтĕнче залсенче халăх йышлăрах пуçтарăннине курас килет. Шупашкарта тĕнче шайĕнчи мероприяти иртнине çынсем пĕлмесĕрех юлмаççĕ паллах. СССР халăх артистки Инна Чурикова реклама енĕпе ытларах ĕçлеме сĕнсе хăварчĕ. Кинотеатрти ирхи тата кăнтăрлахи сеанссене куракансем пыманни пăшăрхантарнă ăна. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çитес çулхи кинофестивале тата вăйлăрах йĕркелеме шантарчĕ.

Мария РОМАНСКАЯ.



ÇЫРĂНТАРУ

# Юратаççĕ, вулаççĕ



Автор сăн ÿкерчĕкĕ.

Алина Николаева почтальон ытти мĕн пур чăваш хĕрарăмĕ пекех ирхи шуçăмпа вăранать. Ĕнисене суса кĕтĕве хăваланă тата хуçалăхри ытти ĕçе тирпейленĕ хыççăн сумкине йăтса вичĕ çухрăмри Шуркасси почта уйрăмне васкать вăл. Кашни кунах çапла. Тáврари вичĕ пĕчĕк яла ăна уйăрса панă. Шуркассине Канашран почта машини килсе кайнă хыççăн ытлари кун вулакансемпе тĕл пулма почтальонпа пĕрле çула тухрăмăр. Ялти чи пысăк та хитре пĕвене кăтартас тесе мана тÿрĕ çулпа илсе кайрĕ вăл. Çыран хĕррипе – лапсăркка йăмрасем. Çу кунĕсенче кунта халăх канма юратать. Пулă тытаççĕ, шашлăк пĕçереççĕ... Улăхсемпе уй-хир, çырма-çатра урлă Ямпаха çитрĕмĕр. Утмалăх пур. Урине çемçе тапăчки тăхăннă почтальон сăрталла вĕçтерет кăна. Эпĕ те унран юлмастăп. Çанталăкĕ пăртак сивĕтнĕ май хирте питĕ уçă. Çырма-çатраллă тăрăх хитре çав. Ку енче пĕвесемпе çăл куç, пĕчĕк кÿлĕ нумай. Çырма хĕррипе – çĕр çырли шап-шурă чечекре. Уйри ешĕл курăк çинче кĕтÿ çÿрет. Пĕчĕк вăрмансемпе катасенче пĕр чарăнми куккук авăтать. Çуллахи вăхăтра ялта ырлăх çав. Ямпах тăрăхĕ йăмраллă. Ялĕ пысăк мар. Велосипедпа вĕçтерсе килекен аслă ÿсĕмри хĕрарăм пире курсан чарăнчĕ. Шуркассине çăкăр илме кайма тухнă-мĕн. «Чи малтан хамăн çырăнас пуль, алă çĕмăл-ши ман, калаймастăп, кутăн-ха эпĕ», – тесе шÿтлесе те илчĕ. Пирĕн кăларăма çырăнчĕ те велосипедпа малалла вĕçтерчĕ. Ял халăхĕ пахчара тăрмашать. Мĕн пур ĕçне пăрахсах хăшĕ-пĕри «Чăваш хĕрарăмĕпе» туслашма васкарĕ.

Ямпахсемпе сыв пуллашса Улаксара утрăмăр. Амăшĕ çут тĕнчерен уйрăлса кайнă хыççăн пĕчченех пурăнакан Сергей Васильев пирĕн хаçата çырăнчĕ. Чăваш хаçат-журналĕ вулама юратать вăл. Çак тăрăхри Людмила Фомина, малтан ялти лавккара сутуçăра ĕçленĕскер, эпир килессине пĕлсе чей вĕретсе, апат пĕçерсе хунă. Кил-çурчĕ питĕ типтерлĕ. Дизайнера вĕренсе тухнă, халĕ Мускавра пурăнакан кĕçĕн хĕрĕн ÿкерчĕкĕсене курса килентĕмĕр. Людмила Аркадьевна «Чăваш хĕрарăмĕ» суйласа илчĕ. Çемьере чи ватти, Елен аппа, тепĕр çур çуллăхра та хăй юратакан кăларăма илсе тăма кăмăл турĕ. Фоминсен кÿршисем, пилĕк ачаллă Васильевсем те, пĕр пин тенкĕлĕх хаçат çырăнчĕç.

Яла корреспондент килнине кура халăх хăйсене пăшăрхантаракан, канăç паман ыйтусене хускатма тăрăшать. Улаксар урамĕнчи çул тавра сăмах пуçарчĕ чылайăшĕ. Çуллахи вăхăтра тап-такăр, кĕркунне-çуркунне вара тухса кĕме çук-мĕн. Пушар, васкавлă пулăшу машини яла мĕнле кĕретши? «Çын вилсен масар çине лашапа аран илсе анатпăр. Хулана каймалла чухне атăпа тухатпăр та çул хĕрринче улăштарса тăханса лартса хăваратпăр», – тарăхсах калаççĕ ял çыннисем. Лавкка таран çул пушшех япăх-мĕн. Апат-çимĕç, куллен кирлĕ тавар турттаракан машинăсем хыççăн тата вăйлăрах çăрăлни пирки калаççĕ. Ял тăрăхĕн ертÿлĕхĕ хытă çул сарса пама шантарнă-ха, анчах та хăçан пулассипалла мар хальлĕхе.

Улаксар ялĕн тепĕр урамне утрăмăр. Кунта та хаçат юратсах çырăнчĕç. Аслăяла хир урлă тепĕр çухрăм каймалла. Юрий Ювенальев художник тата Лидия Сарине çыравçă ялĕ ку. Аслăялта та вулама юратакан халăх пурăнать. 28 çул почтальонра тăрăшнă Маргарита Петрова «Чăваш хĕрарăмĕпе» «Çамрăксен хаçатне» çырăнчĕ. Аслăрах ÿсĕмри темиçе çын тепĕр çур çулта пирĕн кăларăма илсе тăма кăмăл турĕ.

Алина Леонидовна эпир киличчен тепĕр çур çуллăх валли çак пĕчĕк, сахал киллĕ тăватă ялта «Чăваш хĕрарăмне» 12 экземпляр çырăнтарнă. Иксĕмĕр пĕрле çÿресе тепĕр 13 çынна хамăр хаçатпа туслаштартăмăр. Туссен йышĕ тата ÿсмеллечĕ те, нумайăшĕн алăкĕ çинче çăра çакăнса тăратчĕ. Ял халăхĕ çу кунĕсенче килте лармасть.

Алина Николаева Шуркасси почта уйрăмĕнче вун иккĕмĕш çул ĕçлет. Шăрăх-и е çумăрлă çанталăк-и, çил-тăман алхасать-и – ниме те пăхмасăр, кашни кунах çич-сакăр çухрăм çуран утать вăл, хаçат валеçнисĕр пуçне ял çыннисен ытти чылай ыйтăвне тивĕçтерет. Ирех тухса кайса кăнтăрла иртсен, тепĕр чухне каç енне çеç тавăрнаканскер кил-тĕрĕшри ĕçсене те тума ĕлкĕрет. «Пиллĕкпе» çеç вĕренекен хĕрĕ Настя кăçал шкулпа сыв пуллашать. Вăл та нумай пулăшать амăшне.

Шуркассинче, Кăшнаруйĕнче те «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата юратсах çырăнчĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**
Канаш районĕ.

# Чăваш сасси çĕтмĕ-ши?

*Чĕмпĕр облаçĕнчи Аслă Накаткин – Чăнлă районĕн тĕп сали. Вăл 1675 çулта никĕсленнĕ. Унта 5700 яхăн çын пурăнать, 60-65% – чăвашсем. Сайра хутра пулин те республика тулашĕнче пурăнакан йăхташăмăрсем патне кайса курмашкăн эпир те çапах та вăхăт тупатпăр. Вырăнти ертÿлĕхпе калаçса татăлнă хыççăн иртнĕ эрнере Аслă Накаткин ялне çула тухрăмăр. 200 ытла çухрăма парăнтарса кăнтăрла тĕлне райцентра çитсе кĕтĕмĕр. Ял пуçлăхĕпе Илья Митрофановпа телефонпа çыхăнтăмăр, вăл пире ял тăрăх администраци çуртĕнче кĕтме ыйтрĕ, хăй кĕçех пырасса пĕлтерчĕ. Унти специалистсем Шупашкартан журналистсем килессине пĕлмен те, çавăнпа та пире курсан нимĕн калама та аптăрарĕç. Пуçлăх телефоне урăх тытмарĕ, хăй те шăнкăравламарĕ. Вăл мĕн сăнлă иккенне те курса юлаймарăмăр... Чăвашлăха упрас тĕлĕшпе вырăнти влаç мĕнле ĕçленине çакнашкал вак-тĕвекренех хаклама пулать-çке. Аякри тăван тарават пулаканччĕ те. Анчах пуçлăх явапсăрлăхĕшĕн ыттисене айăпламăпăр.*

### Библиотекарь хăй укçипе хаçат çырăнать

Аслă Накаткин культура çуртне кĕтĕм. Фойере кĕрĕк сутаççĕ, 25-85 пин тенкĕ тăраканскерсене çынсем тăхăна-тăхăна пăхаççĕ. Пуян халăх пурăнать кунта эппин. Хаçат çырăнма хапăл тумĕç-ши? Çак ыйтупа чаплă тавар суйлакансене чăрмантартăм. Эпĕ калнине ăнланакан тупăнмарĕ, вырăсла куçарма тиврĕ. «Мы по-чувашски не читаем», – текелесе пăрăнса утрĕç. Сăмах май, урамра та хамăр чĕлхепе калаçнине илтсех каймарăм. Чăваш сасси çĕтмĕ-ши кунта?

Иккĕмĕш хутра вырнаçнă библиотекăна хăпартăм. Чĕмпĕрте тухса тăракан «Канаш» хаçатсăр пуçне чăвашлисем тек çук. Çырăнмашкăн укçа уйăрмаççĕ-мĕн. Çапах та чăваш хăш-пĕр ялĕнчи вулавăш ĕçченĕсем хăйсен укçине хĕрхенмеççĕ. Тĕслĕхрен, Чăвашкассинчи Ольга Ванюшкина пирĕн хаçата çырăннă, ăна ялĕпех вулаттарать.

Анфиса Клопкова директор, Ирина Петрашкина библиотекарь – чăвашсем. Тăван чĕлхепе кăларнă кĕнекесем кунта юлашки хут хăçан килнине вĕсем те лайăххăн аса илеймерĕç. «90-мĕш çулсен пуçламăшĕнчеччĕ пулас», – шухăша кайрĕç вулавăш ĕçченĕсем. Çав вăхăтлах «Тăван Атăл», «Капкăн», «Пике» журналсем килсе тăнă. Халĕ Шупашкарта тухакан пичет кăларăмĕсем кунта чылайранпа çитмеççĕ. Сентресем те чухăнлансах юлнă, хальхи пĕр кĕнеке те çук.

### Аслă ăру юрă-ташăпа пурăнать

Аслă Накаткин культура керменĕнче пултарулăх чăваш коллективĕсем – виççĕ. «Шанăç» ушкăна – РФ культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, писатель, юрăçă Валентина Тараватв, ачасен «Çăл куç» эстрада ушкăнне Мария Шадрикова ертсе пыраççĕ.

Юлашки çулсенче аслă ăрури хĕрарăмсем «Уйсас» фольклор коллективне чăмăртаннă, унта халĕ 8 çын çÿрет. Чи асли – 78-ти Антонина Стратонова. Ушкăн ертÿçипе Александра Синдюковăпа калаçма тÿр килчĕ. Сăмах май, вăл «Чăваш хĕрарăмĕпе» туслашма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Хăй 40 çул ытла сывлăх сыхлавĕнче, ачапăча медсестринче ĕçленĕ. «Музыка енĕпе ятарлă пĕлÿ илмен пулин те юрласси манăн – юнра та, чунра та. Пирĕн йăхра чапа тухнă артистсем, юрăçсем пур. Ĕлĕкхи юрăсемпе эпĕ тахçантанпах кăсăкланатăп. Атте-анне, ватăсем юрланине ача чухнех ăса хывăттăм. Сăмахĕсене çырнине нисçта та курман, пирĕн йăх-несĕл темĕн чухлĕ юрă асра тытса пурăннă. Фольклор пухса кĕнеке кăларас шухăш çуралчĕ. Çĕрле вăранса кайсан та юрă йĕркисене аса илсе выртаттăм», – чун туртăмĕпе паллаштарчĕ Александра Леонтьевна. Çапла вăл малтанах «Канаш» хаçатра рубрика пуçарса янă, унта ĕлĕкхи юрă сăмахĕсене пичетленĕ. Николай Розов тавра пĕлÿçĕн «Харăс тăрса юрлар-и?» кĕнекине Александра Синдюкова пухса хатĕрленĕ 14 юрă кĕнĕ.

Пурнăç кирек хăш тапхăрта та илемлĕ, тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн этем пурăнма кăна пуçлать тесе ахальтен каламаççĕ иккен. Юрă-кĕвĕ тĕнчипе çывăхланнă «Уйсас» хĕрарăмĕсем те çакнах çирĕплетеççĕ.

**Алина ИЗМАН.**

СЫВЛĂХ

# Чĕре чирĕпе çуралнисене сиплеме

Республикăри кардиологи диспансерĕнче чĕре чирĕпе çуралнă ачасене операци сĕтелĕ çине хунă. Малтан çак амакпа нушаланакан тĕпренчĕксен медицина пулăшăвĕ шыраса урăх региона çитме тивнĕ. Братислава ача-пăча кардиологи центрĕн профессорĕ Павел Гавора республикăри кардиохирургсем валли ăсталăх класĕ йĕркелени пирĕн тăрăхшăн çав тери пĕлтерĕшлĕ.



Операцие ÿте касмасăр тенĕ пек ирттерни те – хăйне евĕрлĕх. Павел Гавора каланă тăрăх – çакăн хыççăн чир вĕрĕлмест, пациент хăвăртах вăй илет. «Операци 20 минута яхăн тăсăлать. Пĕçĕ юн тымарĕнчен чĕре патне ятарлă инструмент чикеççĕ. Ирхине операци чăтса иртернĕ ача каçхине ура çине тăрать, апатланать, ашшĕ-амăшĕпе калаçать. Йăлтах йĕркеллĕ пулсан тепĕр кун ăна киле яма та юрать», – ăнлантарать Словаки тухтăрĕ.



Павел Гавора – çак меле шухăшласа кăларакансенчен пĕри. 1995 çулта Братиславăра пуçласа çакнашкал операци тунă вăл. Шупашкарти 7 ача, вĕсен çывăх тăванĕсем çак мелĕн ырă витĕмне туйса иртерчĕç ĕнтĕ. Тĕпренчĕксенчен чи пĕчĕкки – 2 çул та 10 уйăхра, асли – 10-ра.

Ятарлă проект тăрăх Словаки тухтăрĕ пирĕн тăрăхра сахалтан та 2 çул ĕçлĕ. Вăл пулăшнипе хирургсен, анестезиологсен, кардиологсен ăсталăх шайĕ ÿсĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ВУЛАКАН ПУЛĂШУ ЫЙТАТЬ

**Йĕке хӳре… Унран ирсĕр чĕр чун пурши? Ăна куç умне кăларса тăратсанах ӳт хур шатрипе витĕнет, чун çӳçенет. Çăткăнскер йăлтах кăшлать, шăтарать, чир-чĕр сарать… Шупашкарти Ленин Комсомолĕн урамĕнче пурăнакан Зоя Алексеева та çав чĕр чуна пула юлашки кунсенче канăçне пачах çухатнă, мĕншĕн тесен вăл хваттерĕнче… йĕке хӳрепе пурăнать.**



## Çынран хăрамаççĕ

Ним тума аптăранипе иртнĕ эрнере вăл пирĕн пата шăнкăравларĕ. «Çурта пăхса тăракан управляющи компани пуçлăхĕ эпир каланине шута та хумасть. Паян унпа вăрçăнса та илтĕмĕр. Санэпидемстанци организацийĕ уйрăм çынсен ыйтăвне йышăнмасть. Тасҫа кайса кĕмелле пирĕн...» – пăлханнă сасă илтĕнчĕ телефон кĕпçи тепĕр енче.

Шăнкăрав йĕрĕпе иртнĕ кĕçнерни

# Хваттерте... йĕке хӳрепе

кун çула тухрăмăр. Ленин Комсомолĕн урамĕнчи 52 çурт чарăну хыçĕнчех вырнаçнă. Урама уçăлма тухнă çынсемпе калаçрăмăр. Кунта йĕке хӳре çав тери йышлă ĕрчесе кайнине вĕсен сăмахĕнчен те, çурт йĕри-тавра шăтатса пĕтернĕ хушăк-çуракран та ăнланса илтĕм. Тискерскерсем уйрăмах каç кӳлĕм путвалтан йышлăн тухаççĕ те мĕн ирччечех алхасаççĕ иккен. «Пепкеме урама кăларма хăратăп. Пĕчĕкскер йăлтах пĕлесшĕн-çке: уншăн кушак çури е йĕке хӳре – пĕрех, пырать те тытать. Ирсĕрсем çынран хăрама та пăрахрĕç», – каласа кăтартать çамрăк хĕрарăм.

Зоя Алексеева путвала кĕртсех кăтартасшăнччĕ. Сантехниксем каланă тăрăх, унта вăрăм хӳреллисем – эшкерĕпех. Алăка уçсанах сăмсана пăнтăх шăршă пырса çапрĕ. Çук... хамăн ĕçе тем пек юратсан та тĕттĕм те нӳрĕ çĕре кĕреймерĕм.

Йĕке хӳре наркăмăшне путвала хурса тухмашкăн тирпейлӳçĕсене хушнă-мĕн. Анчах лешĕсем, ман пекех, унта кĕме хăранă. Этем мар, кунта пурăнакан кушаксем шикленеççĕ те. /Хула кушакĕсем «чупса çӳрекен апата» паллаМаççĕ те ахăртнех./

Пĕрремĕш хутра пурăнакан Галина Шкерина хваттерне те кăшлаканскерсем иленесшĕн пулнă. Тамбурти тимĕр алăка уçса хунăран пĕри чутах кĕреймен, юрать-ха хĕрарăм вăхăтра курса ĕлкĕрнĕ те чĕр чуна хăваласа янă. «Каçхине балконтан пăхса тăтăм: пĕр ушкăн, ятарласах шутларăм та – унта 7-ĕнччĕ, кил картинчи çӳп-çап контейнерĕ еннелле йăкăртатрĕç. Ăсланса çитрĕç мурсем, пĕчченшерĕн çӳремеççĕ», – тепĕр хĕрарăм каласа кăтартнине итленĕ май сивĕ шатри тапса тухрĕ.

## Бетона та, кантăка та шăтараççĕ

Çурт йĕри-тавралла утрăмăр. Фотоаппарата авăрласах хунăччĕ, анчах шăтăк-çуракран пĕри те пуçне кăларса кăтартмарĕ-ха. Зоя Алексеевăн хваттерне кĕтĕмĕр. «Хĕрĕмпе иксĕмĕр те сыврăйми пултăмăр, сутă сӳнтермесĕрех выртатпăр. Наркăмăш та хурса тухрăмăр, çаплах çĕрле шăкăртаттаракан пур. Пĕр кунхине, хваттерте йĕке хӳре курнă хыççăн, лăпланас тесе урама уçăлма тухрăмăр. Икĕ сехетрен таврăнтăмăр та... ваннăй алăкне кăшласа тăкнă мурсем! Шăтăксене цемент ирĕлчĕкĕпе кантăк ванчăкĕ хутăштарса хупласа тухрăмăр. Усси çук – тепĕр вырăнтан шăтараççĕ, бетона та, кантăка та витереççĕ шăлĕсем. Паянхи кун та шар куратăп, хваттерте шăршă тăрать, чăтăм çук... – пăшăрханать хĕрарăм. – Эпĕ пĕлекен 5 хваттере кĕнĕ ирсĕрсем, балконран та хăпараççĕ пулас».

Çурта пăхса тăракан «ПИК-1» организацие кайма тухрăмăр. Çурт кĕтесĕнче йĕке хӳре чупса кайнине сасартăк асăрханăскер кăшкăрсах ятăм, Зоя Леонидовна хыçне пытантăм... Сăн ӳкерессии-и унта! /Чĕр чун та эпĕ хама алла илессе кĕтсе тăмарĕ, сăн ӳкерĕнесшĕн пулмарĕ курăнать/. Картишĕнче çӳп-çап контейнерĕсене пушататчĕç, çавăнта апат шыранă ĕнтĕ. «Машина пичкинче те пур вĕсем», – систереççĕ водительпе пулăшаканĕ.

Ленин Комсомолĕн урамĕнчи 52 çурта хирĕçех 181-мĕш ача садикĕ вырнаçнă. Унăн картишĕнче палас çавакан хĕрарăмпа сăмахларăмăр. «Эпир курман, пĕлместпĕр», – терĕ çеç хĕрарăм. Анчах ăна ĕненес килмерĕ. Тин çеç ача садĕнчен 10 метрта ирсĕр чĕр чуна хам куçпа куртăм-çке. Иккĕленӳ кайран, çак садикре ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă воспитательницăпа калаçнă хыççăн, сирĕлчĕ. Кунта йĕке хӳресем мĕн ĕлĕкех, ачасене талăкĕпех йышăнакан ушкăн ĕçленĕ чухнех, пулнă. Пĕррехинче садик ĕçченĕсем çĕрле такам шакканă сасăпа вăранса кайнă. Сисчĕвленнĕскерсем йĕрке хуралçин нарядне те чĕннĕ. Анчах вăрă-хурах мар, йĕке хӳресем сывăрма кансĕрленĕ иккен!

Пролетариат урамĕнчи 2 тата 3-мĕш çуртсенче пурăнакансем те сăтăрçăсенчен хур тӳснине пытармарĕç.

## Ĕмĕрĕпех кĕрешеççĕ

Этем ăс-пуçĕ темĕнле хăватлă технологи шухăшласа кăларнă саманара, 21-мĕш ĕмĕрте, çынсен мĕншĕн-ха хваттерте йĕке хӳрепе пурăнмалла? Нивушлĕ хăтăлма май çук унран? Çак ыйтусен хуравне шыраса «ПИК» организаци пуçлăхĕ Сергей Дедушкин патне пырса кĕтĕмĕр.

– Планпа килĕшӳллĕн çулталăкра икĕ хутчен, çуркунне тата кĕркунне, сăтăрçăсемпе кĕрешес енĕпе мĕн пур çуртра дератизаци ирттеретпĕр. Ака уйăхĕнче çакнашкал ĕçсем пулчĕç. Çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче сантехниксем путвала тепĕр хутчен те наркăмăш пăрахрĕç, йĕке хӳре виллисене витривитрипех илсе тухрĕç унтан. Вилеймен-нисем анранă ахăртнех. Ку чĕр чун наркăмăша хăвăрт хăнăхать, çавна май дезинфекци тăвакан организацие улăштартăмăр, вăл тепĕр тĕрлĕ наркăмăш парĕ.

Коммуналлă тăкак тарифĕсем тăватă çул ӳсмен. Вĕсемпе килĕшӳллĕн йĕке хӳресемпе кĕрешмелли ĕç-пуçа планпа пăхса хунинчен ытла пурнăçлаймастпăр, мĕншĕн тесен йăлтах укçа-тенкĕпе çыхăннă ку, – ăнлантарчĕ Сергей Вениаминович. – Çак чĕр чун этемлĕх пуçланнăранпах пурăнать, вăл пур çĕрте те пур, унпа ĕмĕрĕпех кĕрешеççĕ. Çавăнпа та нимĕнле инкек те, сивĕч ыйту та курмастăп унта.

– Пур çĕртех мар та... Эпĕ пурăннă çĕрте, сăмахран, çук-çке, – хирĕçлерĕм çапах та.

– Пур, эсир асăрхаман кăна, – парăнмарĕ пуçлăх.

Кунта йĕке хӳре мĕншĕн уйрăмах йышлине сывăхра çӳп-çап купи пуррипе çыхăнтарать вăл. Çынсен тирпейсĕрлĕхĕ те витĕм кӳрет-мĕн. Хăшĕ-пĕри çӳпçапа контейнер патне илсе çитерейместь, подъезд умĕнчех пăрахса хăварать. Тата çӳп-çап камерисене те хуптарасшăн мар иккен. «52-мĕш çурт тавралла çĕнĕрен отмостка тумаллах. Анчах малтан çуртăн тăррине улăштармалла, ку ĕçе пĕлтĕрех пуçăнтăмăр. Килти шăтăк-çуракăсене хваттер хуçисен хăйсен лайăххăн питĕрмелле, вĕсем патне пырса юсав ирттерейĕмĕр ĕнтĕ эпир», – палăртрĕ Сергей Дедушкин.

Пуçлăхсем мĕн хуравламаллине пĕлеççĕ-ха. Анчах сăмаха çеç çирĕплетнине курасшăн халăх. «Йĕке хӳресене пĕтерес енĕпе ĕçсене пурнăçланă», – теççĕ пулсан мĕншĕн-ха халĕ те вĕсем кĕшĕлтетеççĕ, çынсене шар кăтартаççĕ? Апла тăк ĕçе çиелтен е ячĕшĕн кăна туса ирттернĕ, çавăнпа та хăш-пĕр çĕрте пĕр ыйтăвах темиçе çул тăсăлать те.

**Алина ИЗМАН.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Л.ШУМОВА коллажĕ.

САККУН АЛЛИ ВĂРĂМ

# Çутă тĕнче кураймасăрах

– Хырăм... – йынăшнă хĕрарăм. Çул çинчи инкеке пула хăрушсăрлăх ременĕ ача кĕтекенскерĕн хырăмне хыттăн касса лартнă. Пулас амăшне тӳрех больницăна ăсатнă, анчах варти пепкене çăлма май килмен...

Арăмĕпе упăшки икĕ тĕпренчĕкне кукамăшĕпе хăварса Куславкка районĕнчен Вăрмара кайма тухнă. Виççĕмĕш пепкине кĕтекен хĕрарăм мăшăрĕпе больницăналла çул тытнă. Анчах унта тĕрĕс-тĕкел çитеймен... «Волга М-7» автоçулăн 726-мĕш километрĕнче вĕсен çине хирĕç килекен ВАЗ-21074 пырса çапăннă. Унăн рульне Кăркăсстанра çуралса ӳснĕ 21-ри яш тытса пынă. Вăл Мускавран Хусаналла вĕçтернĕ. Çул çинче кана-кана илнĕ пулин те йĕркеллĕн вăй пухса çитереймен ахăртнех. Ыйхă пуснипе йĕкĕт тимлĕхне çухатнă. Фура хыççăн пыраканскер сасартăк тормоз çине пуснă, çăмăл машина вылянса кайнă. Юлашкинчен «Лада-Самара» умнех сиксе тухнă.

Çамрăк хăйĕн айăпне йăлтах йышăннă, ĕç-пуçа тĕпченĕ чухне Хусантан килсех çӳренĕ. Хĕрарăмран каçару ыйтма çав тери çуннă вăл, ăна укçа пама килĕшнĕ, анчах шар кӳнĕ çемье яхăнне те яман.

Куславкка район сучĕ Кăркăсстан çынни тĕлĕшĕпе приговор вуланă, 70 пин тенкĕ – штраф, пепкине çухатнă хĕрарăма инкек кăтартнăшăн 250 пин тенкĕ тӳлеттерме йышăннă.

Судпа айăпланнă çамрăк арçыннăн хăйĕн мăшăрĕ хальхи вăхăтра ача кĕтет.

# Хăнана çитеймен

Пĕлтĕр кĕркунне Патăрьел районĕнчи Шăнкăртан хĕрĕсем хăнана кайма тухнă. Аппăшĕпе йăмăкĕ çулйĕр правилисене пăхăнса çуранах утнă. Анчах Ленин урамĕпе пынă чухне вĕсене ВАЗ «çиччĕмĕш» моделĕ çапса хăварнă та тӳрех малалла вĕçтернĕ. Хĕрсене пуçран, ураран хытах амантса хăварнă вăл. Юрать-ха шар курнисене иртен-çӳрен пулăшнă, вĕсемех «васкавлă пулăшу», полици чĕннĕ.

Районти йĕрке хуралçисем машина хуçине икĕ сехетренех тытнă: ӳсĕр водитель транспорт хатĕрне Свердлов урамĕнчи çурт умне лартнă. 35-ри арçын унччен те çакăн евĕр пăтăрмаха лекни паллă, уншăн ăна 20 уйăх правасăр хăварма йышăннă. Анчах та вăл 4 уйăххранах руль умне ларнă. «Эпĕ çул çине сасартăк чупса тухнă йытта таптас мар тесе иртсе кайма тăрăшрăм», – çапларах ăнлантарнă çил хăван. Выльăх /чăнах та çав вырăнтан касса кайнă пулсан/ сусăрланман, 21-22-ри вăй питти хĕрсен вара чылайлăха сыватмăшра сипленме тивнĕ. Асли 4 уйăх тухайман унтан. Хĕр пĕрремĕш ушкăн инвалиçĕ пулса юлнă.

Водитель тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçарнă. Патăрьелти шалти ĕçсен уйăрмĕн следователĕ Николай Арланов каланă тăрăх – ăна çынна хăрушлăхра пăрахса хăварнăшăн айăплаççĕ.

**Ольга АНДРИЯНОВА.**

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА çĕртме, 2-8

## 2 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.30 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Сегодня вечером» 16+
14.20 «Время обедать!»
15.15, 3.35 «В наше время» 12+
16.10 «Они и мы» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «КУПРИН. ЯМА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Познер» 16+
1.10, 3.05 Х/ф «ВОЕННЫЙ НЫРЯЛЬЩИК» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.25 «Тайна горы мертвецов. Перевал Дятлова» 16+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «РОКОВОЕ НАСЛЕДСТВО» 12+
23.40 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
0.35 «Девчата» 16+
1.20 Т/с «ВИЗИТ К МИНОТАВРУ»
2.40 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-19» 16+
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.45-18.05 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «ВЕСЕЛЫЕ РЕБЯТА»
12.50 Д/ф «Андреич»
13.20 Д/ф «Неизвестная жизнь древних египтян с Терри Джонсом»
14.15 Д/ф «Рыцарь красоты. Василий Поленов»
15.10 Х/ф «ЧУЧЕЛО»
17.15 И. Брамс. Симфония №4. Дирижер М. Плетнев
18.00 Д/ф «Чарлз Диккенс»
18.10 «Полиглот»
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.10 «Правила жизни»
20.40 «Спокойной ночи, малыши!»
20.50 «Острова»
21.30 «Тем временем»
22.15 Х/ф «БЕСЫ»
23.20 Д/ф «Тамерлан»
23.50 «Кинескоп» с Петром Шепотинником. Каннский МКФ
0.30 Д/ф «Конструктивисты. Опыты для будущего. Родченко»
1.25 Дж. Гершвин. Рапсодия в стиле блюз
2.40 «Мировые сокровища культуры»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ИКОРНЫЙ БАРОН» 16+
21.25 Т/с «ЛЕГАВЫЙ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ДОЗНАВАТЕЛЬ-2» 16+
1.30 «Прокурорская проверка» 18+
2.35 Дикий мир 0+
3.05 Х/ф «ЗВЕРОБОЙ» 16+
5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.20 Х/ф «СТРАХ ВЫСОТЫ» 12+
10.05 Д/ф «Александр Барыкин. Недоигранный концерт» 12+
10.55 «Простые сложности» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 «Постскриптум» 16+
12.55 «В центре событий» 16+
13.55 «Осторожно, мошенники!» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
15.55, 17.50 Х/ф «ЖЕНЩИНА, НЕ СКЛОННАЯ К АВАНТЮРАМ» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ТАЙНА СТАРОГО ДОМА» 16+
21.45, 1.30 Петровка, 38 16+
22.30 «Жизнь в долг» 12+
23.05 Без обмана. «Дешевая еда» 16+
0.00 События. 25-й час
0.30 «Футбольный центр»
0.55 «Мозговой штурм. Глобальная слежка» 12+
1.45 Х/ф «ЖИЗНЬ ОДНА» 12+
3.40 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 12+
5.10 Т/ф «Как прокормить крокодила» 12+

### РЕН

5.00, 4.20 Т/с «ВОВОЧКА» 16+
5.40, 7.30, 1.20, 3.45 «Смотреть всем!» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00, 21.00 «Реальная кухня» 16+
14.00, 22.00 «Мои прекрасные...» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.00 «Свободное время» 16+
23.30, 2.00 Т/с «ХОДЯЧИЕ МЕРТВЕЦЫ» 18+

### Чăваш Наци телекуравĕ

18.30 “Республика” информаци кăларăмĕ
18.45 “Ылтăн çӳпçерен” /6+/
19.00 “Туслăх йывăçĕ” /12+/
19.30 “Республика” информационная программа
19.45 “По существу” /12+/
20.00 “Круглый стол” /12+/
20.45 “Акилбупсер” /6+/
23.00 «Республика» информаци кăларăмĕ
23.15 «Республика» информационная программа
23.30 «По существу» /12+/
23.45 «Круглый стол» /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Поэма «Нарспи» в исполнении Ирины Чебановой. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр Сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Рабочая смена. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Радиовулав. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

● Пуç çаврăннинчен тин вĕретнĕ пĕр стакан шыва пĕр кашăк типĕтнĕ катăркас /боярышник/ çырли ярса ăшă вырăнта икĕ сехет тытмалла, сăрăхтармалла. Кунне виçĕ-тăватă хут, апат умĕн пĕр-икĕ кашăк ĕçмелле.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

# Пит çинчи пÿрлешкерен



Вăхăтлăха та пулин çак çимĕçсене – ăшаланă çĕр улми, сĕт, çăкăр-булка таврашĕ, печени-канфет – çиме пăрахмалла. Кăнтăрлахи апата пылак сĕткенсемпе сыпса çимелле мар.

Чĕрĕ пахча çимĕçрен хатĕрленĕ салат çийĕр. Организм таса марпа тулса ларсан токсинсем ÿт витĕр тухаççĕ. Апат ирĕлтерес ĕç лайăхлансан пÿрлешкесем те çухалĕç.

* * *

● Теркăланă пан улмине пĕр кашăк сĕтпе тата сĕлĕ хăрпăкĕпе хутăштарса 20 минутлăха питe сĕрмелле.

● Пуçа çунă хыççăн улмуççи çулçи ярса лартнă шывпа чÿхесен çÿç йăлтăртатса тăрĕ. 1,5 литр шыва пĕр ывăç таса та сывă çулçă /çуллахи сортсем аванрах/ ярса вĕреме кĕртмелле, пĕр сехет тăрăлтарса лартмалла.

● Пите чĕрĕ пан улми касăкĕпе сăтăрса кăштах массаж тусан, кайран пан улми уксусĕпе хутăштарнă шывпа /çур литр шыва пĕр кашăк/ çусан ÿт çуталса илемленет.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Концерт кăтартакан упăшка

«Йĕркеллĕ арăмсем каç пулсан киле васкаççĕ. Эсĕ пур ялан театра, кинона, концерта чупатăн», – ÿпкелешет ачасем валли апат пĕçерме пуçланă упăшка. Юрать, пăсне кăларса ятăрах. Эпĕ кĕске вăхăтрах тĕпренчĕксемпе пĕрле урок тума та, килте тирпейлеме те, япала çума та ĕлкĕртĕм.

Мĕнех вара – халăх хушшине тухма, юлташсемпе тĕл пулма юрамасть-и? Артистсен пултарулăхĕпе киленес килет. Мăшăр «юрланине» кăна итлесе пурăнмалла-им манăн? Тĕрĕссипе, вăл юрă сăмахĕсене те, кĕввине те йĕркеллĕ пĕлмест. Ĕçсе ÿсĕрлесен тем шухăш кĕрет ăна: анлă сарăлнă юрăсен пĕр-ик йĕркине аса илет те пуçлать концерт кăтартма. Урă пуçпа вара ăна хорта та юрлаттараймăн. Эпĕ хăнăхнă та – чăтатăп. Пĕррехинче таксистăн хăлхи хуплансах ларчĕ пуль? Ун чухне иксĕмĕр уявран таврăнаттăмăр. Çăмăл машинăн хыçалти ларкăчĕ çине вырнаçнăччĕ кăна – упăшка радио чарма ыйтрĕ. Руль умĕнчи, паллах, итлерĕ. Унăн ăçта кайса кĕрес – кăмăла тивĕçтермесен пассажир укçа памĕ, вăрçăнма хăтланĕ. Мăшăрăм çул тăршшĕпех хăйне сцена çинчи пек туйрĕ ахăр. Эх, хăлхи çине мĕншĕн упа пуснă-ши тульккăш? Чарса пăх-ха ăна – тÿрех тутине тăсать. Хам та юрă ăсти мар, çапах упăшкана юрласа пулăшас терĕм. Ăна хавхалантарма нумай кирлĕ-и? Çынсем пек савăнас... Таксиста юрăймарăмăр пулмалла, ахальтен мар иксĕмĕр çине темиçе хут кăнн! пăхса илчĕ. Хăть те мĕн шухăшлатăр – унпа урăх тĕл пулас çук. Упăшка мĕнешкел хытă ыталаса илчĕ мана. Уй, кăмăл тÿрех усăлчĕ.

# Кĕрĕк те кирлĕ мар

Темле уяв та пур мăшăрăн ĕçĕнче. Ĕçтеш-хĕрарăмсем ăна киле леçсе хăварма пуçларĕç. Троллейбус-автобуспа мар, çăмăл машинăпа... «Вăт мĕнле лайăх ăна», – вăрçăнатăп ăшра. Вăл пур кĕрсе выртать те хуп турттарать. Манăн талăкĕпе тар кăларсан та ĕç пĕтмест. Те ăнланать ĕнтĕ çакна арçын?

«Нумай ĕçлеççĕ вĕсем, хăйсем пĕлнĕ пек канччăр ĕнтĕ», – мăшăрне хÿтĕлет ĕçтешĕн арăмĕ. Ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ арçынна таксипе ярăнтарать. Эпĕ упăшкана хула тăрăх шыраса çÿрес çук. Çакна вăл хăй те лайăх пĕлет.

«Çак уйăхра пĕр кун та пулин киле вăхăтра таврăнмасан шашкă кĕрĕкĕ илсе тăхăнăп. Кайран санăн сахалтан та икĕ çул кредит тÿлесе пурăнмалла пулĕ», – терĕм мăшăра ир тăрсан. Чун çунтармăш нимĕн те каламарĕ, хăпăл-хапăл тумланса ĕçе тухса кайрĕ.

Те ăс кĕчĕ ăна, те укçине шеллерĕ вăл – уйăхĕпех пĕр тумлам эрех ĕçмерĕ, ирĕн-каçăн тĕпренчĕксем патне садике чупрĕ. Мĕн тетĕр – кĕрĕк илеймерĕм. Апла пулин те çакăншăн пĕрре те кулянмастăп. Япала кивелсе юрăхсăра тухать, упăшка вара мана пĕр ĕмĕр юрататъ, ăшă сăмах калать, хуçалăха тытса пыма пулăшать. Хĕрарăма урăх мĕн кирлĕ?

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ТЕМ КАЛАМАЛЛА

# Вĕçкĕн хĕрсене ытларах кăмăлласçĕ

Кĕтерук юрату çинчен кино пăхма кăмăллать, ыйхине татсах çĕрлечченех телевизор умĕнче ларать. Хăйĕн пурнăçĕ ăнманранах сериалти сăнарсен шăпипе, вĕсен юрату историйĕпе йăпанать пĕччен хĕр. Телейсĕр хĕрарăм чипер, пуян, лайăх арçынна темшĕн кинора кăна тĕл пулать, кайран вĕсен хушшинче юрату çуралать. Çав паттăр савнин мĕн пур ыйтăвне татса парать, йăлтах ăнăçлă вĕçленет.

«Каллех юмах, пурнăçра мĕншĕн çапла мар-ши?» – Кĕтерук телевизор сÿнтерчĕ те çывăрма выртрĕ. Ыйхă килмерĕ унăн, сериал сюжечĕ пуçра çавраннă май хăйĕн шăпишĕн те кулянчĕ вăл.

Кĕтерук вăтăр урлă каçрĕ ĕнтĕ, çемье çавăрайман, ача та çуратман-ха вăл. «Тантăшăм икĕ хутчен те качча кайма ĕлкĕрчĕ, кашнинчех шурă кĕпепе, туй тусах пĕрлешрĕ. Эпĕ халĕччен те пĕркенчĕк тăхăнса кураймарăм...» – шухăша кайрĕ хĕрарăм. Пĕр класра вĕреннĕ тусĕн пĕрремĕш упăшки те начар арçын марччĕ, арăмне çăмăл машина туянса пачĕ, укçа лайăх ĕçлесе илетчĕ. Хальхи тата пуянрах-мĕн. Килĕ-çурчĕ – кермен пек, кашни çулах аякри çĕр-шыва канма çÿреççĕ. Çавăнти сăн ÿкерчĕксене социаллă сете лартса та хунă... Киноран мĕнрен кая? Тепĕр тантăшĕ тата, 3 ачаллăскер, упăшкипе пурăннă çĕртех еркĕн тупрĕ. Кайран мăшăрне килĕнчен кăларса ячĕ, çĕнĕ савнийĕ те çемйине пăрахсах ун патне çÿреме тытăнчĕ. Упăшки те, еркĕнĕ те килсе каяççĕ халĕ. Хăть сериал ÿкер... Шухăшсен авăрĕнчен тухаймарĕ Кĕтерук.

«Тулли кĕлеткешĕн тиркеççĕ-ши мана?» – аптăрарĕ вăл. Пĕри пулнăччĕ-ха ун пекки. «Кăштах начарланмалла, вара санран чипер хĕр çĕр çинче те пулмĕ», – юптарнăччĕ каччă. Кĕтерук ăна пуçа çухатмаллах юратса пăрахнăччĕ. Яша килĕшес тесе хĕр икĕ уйăхра 10 килограмм начарланнăччĕ. Анчах хутшăнусем пĕрех аталанаймарĕç вĕсен, йĕкĕт урăххине качча илчĕ. Кулянните хĕр апат çисе ирттерчĕ, унччен хăйĕн виçине икĕ эрнерех хăваласа çитрĕ.

Арçын хыççăн чупас йăла çук çав Кĕтерукăн. Вăл нихăçан та чи малтан шăнкăравламасть, никамран та нимĕнле пулăшу та кĕтмест. Авланнисене çывăха та ямасть. Аслă пĕлÿ илнĕскер лайăх вырăнта ĕçлет, хăйĕн хваттерĕнче пурăнать. Ал ĕçĕ тума, апат хатĕрлеме ăста хĕр, кăмăлĕ ырă. Анчах юратура, темшĕн, ăнмасть ăна. Арçынсем вĕçкĕннисене ытларах килĕштереççĕ çав. Пурнăç çине çирĕппĕн пăхакансенчен вĕсем хăраççĕ темшĕн. Кайран мăшăрĕ аиккинелле чупнăшăн, çемье ăшшине упрама пĕлменшĕн, арçынран вĕçĕм укçа кăна кĕтсе ларнăшăн хăйсемех тарăхаççĕ-ха...

«Юрĕ-çке, пирĕн урамра та кĕвел пăхĕ-ха. Хăçан та пулин... Кĕтсе илесчĕ кăна», – шухăш серепинчен хăтăлса тинех Кĕтерук тутлă ыйха путрĕ.

**Алина ИÇĔМПИ.**



АХ, АНЧАХ...

# Айккине чупма чарайманăм

Çемье çавăрнăранпа кĕçех 25 çул çитет. Манăн арçын хĕрарăмсене çав тери юратать. «Юратать» тени тĕрĕсех те мар-ха, ку туйăм уншăн ют пек туйăнать. Тÿррине каласан, упăшкам аиккинелле чупать. Çамрăк чухнех ясарччĕ вăл, ашшĕ те вĕсен çавнашкалччĕ. «Ютти патне кайса килмесĕр пĕр кун та иртмест», – ятлатчĕ хуняма мăшăрне. Мĕн виличченех хĕрарăмсемпе ашкăнса пурăнчĕ вăл, вырăн çинчен тăрайми пулсан арăмĕн куçĕнчесе пăхма тиврĕ...

Гена пĕрлешнĕ хыççăнах мана ултала тытăннă-мĕн. Малтанах сисмен эпĕ çакна. Çулсем иртнĕçемĕн каласа кăтартакансем тупăнчĕç. «Водитель упăшка – упăшка мар», – тесе ахальтен каламан иккен. Гена хамăр тăрăхрах еркĕнсем тупнă. Колхоз столовăйĕнчи поварпа чылай вăхăт явăçса пурăннă, фермăри пĕр доярка унран ача та çуратнă тесе сăмах тухнăччĕ ялта. Гена ăна йышăнмарĕ, хăйне таса çын евĕр кăтартма пĕлетчĕ çав вăл. Эпĕ, ухмаххи, ăна ĕненеттĕм. Урараних тытман тăк çаплипех суккăр тăмана пек пурăнаттăм-и тен?

Ялта туй пыратчĕ. Каç пулнă çĕре Гена самаях ÿсĕрĕлме ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ.



Эпĕ ĕçке туй арăмĕн çи-пуçне тăхăнса кайнăччĕ те упăшкана йĕрлесе çÿрейменĕм. Тула каяс йÿтĕмпе пахчаналла кĕтĕм. Пĕшкĕннĕччĕ кăна, çĕр улми ани тĕлĕнче пăшăлтатнине илтрĕм. Çавăнти арçын манăн Гена пулчĕ тăчĕ, хĕрарăмне те палларăм. Намăссăрсем çĕр улми касси хушшине кĕрсе выртнă...

Çакăн хыççăн уйрăлатăп тесе шухăшларăм. Икĕ ачапа ăçта тухса каяс-ха манăн, варта виççĕмĕшĕ те пур. Хуняма та «хĕрарăмăн тÿсмелле» тесе ăс пачĕ. Арçын нимĕн те пулман пек çÿрерĕ. «Ÿсĕр пулнă, тÿнсе кайнă», – тенисĕр пуçне çунакан чĕрене нимĕнпе те йăпатаймарĕ. Çут çанталăк çавнашкал хĕрÿлĕх парнеленĕ пулсан нимĕнле сăмахпа та витерме çук ăна. Тухса каяссипе те хăратаймастăп. «Кайсам, кам тытса чарать сана? Эсĕ алăк урати урлă пуссанах ман пата виççĕн хăрăсах килсе лараççĕ», – те чăнласа, те шÿтлесе калать.

Тепрехинче ултава ар хутшăнăвĕ урлă еркен чир çаклатнинчен пĕлтĕм. Ун чухне те тулличчĕ-ха эпĕ. Тухтăр амак пирки пĕлтерсен намăса пула çĕр тĕпне анса каяттăм... Упăшкана туртса çурма хатĕрччĕ. Çакăн хыççăн çур çула яхăн арçынна хам çывăха ямарăм. Уншăн вăл кулянннă пуль тетĕр-и? Çĕрлесерен шутсăр лайăх кăмăлпа киле таврăнатчĕ.

Вăхăт иртнĕçемĕн чун хытрĕ. Кĕвĕçлĕх туйăмĕ пачах та çук халĕ манра. Кирек мĕн хăтлансан та – пĕрех. Чи кирли – Гена хуçалăхра тăрăшуллă çын. Ытти çине алă сулнă ĕнтĕ эпĕ. Хамăн телейĕме ачасемпе, мăнуксемпе хутшăннинче тупрăм. Арçын вара паянхи кун та аиккинче йăпану шырать.

**ЗОЯ.**

УЯВ

# Кашнин чĕринче – хăйĕн Нарспийĕ



Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ Константин Иванов çуралнăранпа 124 çул çитрĕ. Çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче унăн пултарулăхне сума сăвакансем Чăваш патшалăх академи драма театрĕ умĕнчи палăк патне пуçтарăнаççĕ. Кăçал та хăнăхнă йăлапа ăна пуç тайма çитсе килтĕмĕр. Çакнашкал уявсене пысăк йышпа паллă тăвас килет те çав... «Пирĕн чунра чăвашлăх хĕмленни çитмест», – тĕрĕсех палăртрĕ Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай пăт-пат тăракан халăх çине пăхса. Хамăра хисеплеменни мар-и çакă? Чăн та, чи малтанах влаç çыннисен ыттисене тĕслĕх кăтартса çакăнта чечек çыххисем хумалла.

СССР халăх артистки Вера Кузьмина куллен Константин Иванов палăкĕ умĕнчен иртсе çӳрени, вăл çĕнĕ сăнарсем калăплама хăват пани çинчен каларĕ.

«Нарспие нумайăшĕ вылянă, анчах сана çитекенни пулман», – Нина Григорьевăн юбилей каçĕнче сăмах илнĕччĕ СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев. Çак сăнарпа 10 çул куракана тыткăнланă хĕрарăм. Раççей халăх артистки Нина Ильинична Нарспи ролĕшĕнех Патшалăх премине тивĕçнине палăртса хăварас килет. Çак спектакле халăх ăшшăн йышăннине аса илчĕ вăл. «Кашнин чĕринче, чунĕнче – хăйĕн Нарспийĕ, çавăнпа çак сăнара халăх патне çитерме çăмăл пулман», – терĕ артистка.

«Пушкăртстанран Шупашкара килекен хăнасем кашнинчех «Нарспи» спектакль курасшăн. Анчах вĕсен кăмăлне тивĕçтерме çук – ăна тахçанах кăтартма пăрахнă», – пăшăрханса каларĕ ЧР тава тивĕçлĕ артистки Елена Шурту. Çак ĕçе сцена çине çĕнĕрен кăларма вăй çитмест-и пирĕн? Пуррипе мăнаçланмалла, ăна халăх патне çитерме тăрăшмалла.

Чăваш Республикин Пушкăртстанри полномочиллĕ представителĕ Владимир Портнов Слакпуçĕнче, çавăн пекех поэтăн тăван тăрăхĕнче Пелепей районĕнче йĕркеленĕ мероприятисем çинчен каласа кăтартрĕ. Тĕслĕхрен, «Силпи асамачĕ» конкурса кăна 230 ача хутшăннă.

ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Светлана Асамат Олег Цыпленкова тав туса хăварчĕ. Вăл тăрăшнипе Силпи таврашне хăтлăх кӳрес енĕпе нумай ĕç пурнăçланă – халĕ вăл хăш тĕлте вырнаçнине шырамалла мар. Çӳллĕ валак пуçĕнчи çăл куç шывĕ сывлăш çавăрса илме, ăш хыпнине ирттерме пулăшать. Ку вырăнта чăвашсене яланах хапăл.

РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Юман пĕлтĕр «Нарспи» Чĕмпĕрте çурални çинчен эссе пичетлесе кăларни тавра калаçу йĕркелерĕ.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Раиса Сарпи, Лидия Сарине, Галина Кĕмĕл Константин Иванова халалланă сăвă йĕркисемпе паллаштарчĕç.

ЧР вĕренӳ министерствин тĕп специалисчĕпе Татьяна Николаевăпа вĕренӳ институчĕн ĕçченĕ Юрий Виноградов та сăмах илчĕç. Вĕсем чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсен ĕç пӳлĕмĕсен конкурсĕн çĕнтерӳçисене чысларĕç. Мала тухнисем шăпах çак кун парне илме уйрăмах кăмăллине палăртрĕç.

Уява килнисем Патшалăх премине Константин Иванов ячĕпе çыхăнтарас ыйтăва хускатрĕç, çитес çулхи юбилее халех хатĕрленме пуçламалли çинчен каларĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

СĂВĂ СĔВЕМĔ

*Лидия САРИНЕ*

## Йĕресчĕ ачалла...

Эп хам камне манасчĕ те
пĕрре,
Сан умăнта ларасчĕ çеç
тепре.
Чĕрем çине хурасчĕ сан ална,
Ăш каниччен сывласчĕ
сывлăшпа.

Самантлăха манасчĕ ăçтине,
Унчченхилле: «Килсемччĕ!» –
тенине
Илтесчĕ çеç. Эп хатĕр
ал пама.
Анчах пӳрмен шăпа пĕрле
пулма...

Вăхăтлăха манасчĕ
пĕтĕмпех!
Аллусемпе хупласчĕ питĕме...
Иртсе кайни килменшĕн
каялла
Тăраниччен йĕресчĕ ачалла.

ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

*Галина МАКАРОВА*

## Таса хутшăну

Пĕрле ĕçленĕ май
Ятарлă вырăнта
Тĕл пултăмăр пĕрмай
Чăрмавлă пулсан та.

Çапах та хутшăну
Çуралчĕ туххăмрах.
Çуталчĕ сан сăну
Малтан курсассăнах.

Çунатлă туйăмсем
Вăй хушрĕç пурăнма.
Ĕçре çитĕнӳсем
Çĕклерĕç сан ятна.

Вун-вун çулсем иртсен
Пушантăн тивĕçрен.
Пире чунри хĕлхем
Пиллерĕ чăн илем.

Халь тунсăх хуплаймасть
Чунри çав ырлăха.
Вĕри чĕре упрать
Таса хутшăнăва.

## Савнă мăшăрăма

Мăшăрăм – çунатăм,
Уçă сывлăш пек.
Пĕрлĕхшĕн çунатăп
Пурнăç тăршшĕпех.

Мăшăрăм – хăватăм,
Шанчăклă пурри.
Саншăн кĕл тăватăп,
Пулăштăр Турри.

Мăшăрăм – хĕвелĕм,
Хăтлă кил ăшши.
Кăмăл санпа селĕм,
Ырă тăрăшни.

Мăшăр – ăраскалăм,
Савнăшăн тавах.
Сывлăх пултăр санăн,
Саптăр хĕм вучах.



ЧĂН ПУЛНИ

*ЮХМА Мишши*

## Парне



Пурнăç – çырман кĕнеке. Ыран мĕскер пулассине никам та пĕлеймест. Çуркунне пуçланчĕ. Чун-чĕре çут çанталăк ытамне чĕнет. Пушă вăхăт тупăнсанах дачăна кайса пăхас килет. Чăтаймастăп, пĕтĕм ĕçе пăрахсах тухса утатăп.

Пирĕн дачăран инçе мар пĕр çемье: арăмĕ, упăшки тата пĕлтĕр çуралнă ачи – яланах, хĕлле те, çулла та унтах пурăнаççĕ. Ачи çуралнă ятпа пĕлтĕр йытă çури илнĕччĕ.

Те хуçисем пулмарĕç, йытă çури мана аякранах вĕрсе кĕтсе илчĕ. Кĕркуннеренпе хăй самаях ӳснĕ, чăн-чăн йытă пулса тăнă. Хуп-хура, тăватă куçлă; пичĕ çинче урăхларах çăмлă икĕ вырăн пулсан йытă пирки çапла калаççĕ.

– Ан вĕр–ха, – тетĕп ăна. – Эпĕ кӳршӳ вĕт. Е палламарăн-и? Çак хĕл уйăхĕсенче хăв кӳршӳне паллами пултăн-и?..

Эпĕ хăйпе калаçнине илтсен йытă вĕрме чарăнчĕ, ман çине тĕлĕннĕн пăхса илчĕ. Хăйĕнпе кĕркунне темиçе хутчен те калаçнине аса илчĕ пуль.

– Кил-ха, кил, ачашлам! – тетĕп йытта аллăмпа кăчăк туртса.

«Каçар, тӳрех паллаймарăм çав», – тенĕн хӳрине пăлтăрттаттара пуçларĕ хайхи.

– Кил-кил! – тетĕп. – Кӳренмерĕм эпĕ!

Йытă хӳрине пăлтăртаттара-пăлтăртаттара ман пата пычĕ. Пăхатăп та – питĕ выçă иккен вăл. Куçĕнченех паллă. Тутине чаплаттарнă пек тăвать. Чĕлхине кăлара-кăлара тутине çулать.

– Эх, – тетĕп, – питĕ выçă иккен эсĕ. Хуçусем çук-им?.. Темиçе кун апат та паман пулĕ сана... Тăхта, пӳрте кĕрсе пăхамха, мĕн те пулин çук-и унта...

Васкаса кĕтĕм те шкапа уçрăм. Эх, телей!.. Иртнинче, кушаксем килĕç тесе, икĕ хутаç «Китикет» илсе килнĕччĕ. «Çиет-ши ăна йытă?» – тетĕп. Çимелле те-ха!.. Ара, вăл какайран вĕт.

Урама тухрăм. Йытă мана курсан хӳрипе пăлтăрттарса хирĕç чупса пычĕ. Куçĕ çунать. Хутаçа уçicченех хыпса çăтма хатĕр. Пĕрне уçса патăм. Çавăнтах çисе ячĕ. Теприне те çĕре ӳкиччченех хыпса çăтрĕ.

«Тата пар-ха!» – тет. «Урăх çук çав», – тетĕп ачашласа.

Йытă хӳрипе пăлтăртаттарать, ман çума çыпçăнать.

Калаçа-калаçа темиçе хутчен ачашланă хыççăн йытă апат урăх çуккине ăнланчĕ, ман ума ӳкрĕ те пуçне ура çине хучĕ...

* * *

Тепĕр темиçе кунран кĕтмен çĕртен питĕ васкавлăн хăвăрт кăна дачăна кайса килмелле пулчĕ. Çурта кĕрсе кирлĕ япалана шырама тытăнтăм кăна, чӳречерен пирĕн паталла çав хура йытă чупнине куртăм. Çăварĕнче – хура пысăк япала. Пирĕн тĕле чупса çитрĕ те хӳрине вылятса пӳрт еннелле пăха пуçларĕ.

Тĕлĕннипе пӳртрен тухрăм. Йытă мана курсан темиçе утăм турĕ те решеткеллĕ алăк умне çăварĕнчи япалана хучĕ. Мĕн ку?.. Тинкеререх пăхатăп та.. Çĕлĕк! Чăн-чăн, самаях лайăх, паян тесен паян тăхăнма юрăхлă çĕлĕк!

Йытă ман çинчен куçне илмест. «Ил, ку – сана!» – тесе калать пекех.

«Ăçтан тупнă эсĕ куна?» – тетĕп. Йытă ним каламасăр çĕлĕке ман паталла тĕкет. «Ăçтан тупрăн ку çĕлĕке? – тетĕп татах. – Мана валли илсе килтĕн–и?»

Хайхи татах ман паталла тĕкет.

Эпĕ çĕлĕке илмерĕмха. «Кирлĕ мар мана», – тетĕп. Йытă, йынăшнă пек туса, çĕлĕке ман паталла тĕкме чарăнмасть.

* * *

Таçтан тупнă çĕлĕк ку тесе эпĕ йытă тупнине илмерĕм. Васкамалла. Хама кирлĕ япалана шырама тесе пӳрте кĕтĕм.

Кăштах вăхăт иртрĕ. Ширанă япалана тупса тула тухрăм. Йытă çук. Вăл илсе килнĕ çĕлĕк вара çаплах пирĕн алăк патĕнче выртать.

Мĕн пулчĕ ку? Чăнласах та тав тума тăрăшать-и ку йытă?..

* * *

Унтанпа самаях вăхăт иртрĕ. Алăк умĕнчи çĕлĕк те çухалчĕ. Ăна те такам илсе кайнă ĕнтĕ?.. Эпĕ çаплах дачăна кайса çӳретĕп. Йытă мана питĕ савăнса кĕтсе илет. Чупса пырать те ачашланать, çемçен вĕре-вĕре илем пекки тăвать. Тав тунă пекех. «Эсĕ мана выçса вилесрен çăлтăн. Тавтапуçах сана!» – тенĕнех туйăнать. «Ман парне сана килĕшрĕ-и?» – тенĕ пек тата...

Кайран пĕлтĕм, чăнласах та ун чухне йытă выçса вилес патнех çитнĕ иккен. Хуçисем çав тери васкаса урăх хулана пĕр эрнелĕхе тухса кайнă. Тăванĕсен пысăк инкек пулнă-мĕн. Ытла васканипе вĕсем йытти çинчен мансах кайнă. Хайхискерне выçса вилесрен çăлтăм пулать. Çĕлĕк вара чăнласах та – ун парни.

Эпир хамăра тĕнче хуçи тетпĕр. Анчах чĕр чун тĕнчине паянхи куна çитсе те кирлĕ таран пĕлейместпĕр. Тен, вĕсем, чĕр чунсем, çав шутра чи малтан хамăрăн çывăх тус текен йытăсем, пирĕнтен те ăслăрах, пирĕнтен те пархатарлăрах пуль. Чĕлхисем кăна çук. Ĕçĕпе, пурнăçри пулăмсемпе вара вĕсем пире кашни кун тĕлĕнтереççĕ те, савăнтараççĕ те. Вĕсене курма кăна, вĕсене ăнланма кăна пĕлмелле.

2014.

**Суя сăмах чĕрене амантнă**

“Райкин хăйĕн пĕтĕм ылтăнне амăшĕн тупăкне чиксе Израиле ăсатнă – унта унăн ачисем пурăнаççĕ. Хăй те кĕçех унта çул тытать”, – 70-мĕш çулсенче çĕр-шывра çак хыпар çиçĕмле хăвăртлăхпа сарăлнă. Çакăн пирки кухньăсенче кăна

# Райкин мăшăрне Брежнев та кăмăлланă



мар, парти пухăвĕсенче те калаçнă. Аркадий Исааковичăн икĕ ачи те – Катя тата Костя – СССРтах вĕренни, пурăнни никама та пăлхантарман. Райкин амăшĕ вара çак сăмах çураличчен пилĕк çул маларах вилнĕ. Ăна Ленинградра пытарнă. Анчах сăмах-юмах урапине чарма май пулман ĕнтĕ. Райкин Украинăра сионистсен партине укçа-тенкĕпе пулăшатьмĕн. Е тата ăна хупма та ĕлкĕрнĕ иккен. Райкин театрĕ гастроле ертÿçĕсĕрех пырсан куракансем ăнланса пуçĕсене сулнă кăна. Аркадий Исаакович вара çав вăхăтра больницăра инфаркт хыççăн сывлăш çаврăнса илме тăрăшнă... Анчах усал чĕлхесенчен сыватмăш стенисем те çăлса хăварайман. Райкин чунне нимрен ытла эмиграци пирки калакан пуш сăмах çунтарнă. Ăçта та пулин тухса каяс шухăш унăн пуçĕнче нихăçан та пулман-ха та. Шăп çав вăхăтра унăн çÿçĕ, маларах пĕр пайăрки кăна кăвакарнăскер, кĕмĕлпе витĕннĕ.

Кăшт вăй пухсанах Райкин Тĕп Комитетăн культура пайĕн пуçлăхĕ патне пынă – сăмах-юмах шăп çак пÿлĕмрен тухнине вăл питĕ лайăх пĕлнĕ. Лешĕ хирĕçлемен те. Шăпах вăл Райкина хăй патне чĕнсе илсе “совет халăхĕн тăшманĕ” тесе айăпланă. Профессие улăштарма сĕннĕ. Инфаркт сăлтавĕ шăпах çакă пулнă. Çав вăхăтрах Райкин концерчĕсене билет сутнă чух кассăсене утлă милици хуралланă. Совет çыннисемшĕн концерта кĕмелли билет хăйне майлă валютăна çаврăннă. Çак “валюта” нумай алăка уçма пултарнă...

**Клоун артист**

Аркадий Исааковича ашшĕ артиста – клоуна – вĕренме каймашкăн чарнă. Вăл çемьере асли пулнă, ун хыççăн – шăллĕ Макс тата икĕ йăмăкĕ Софьăпа Белла. Аслин ашшĕ-амăшĕн шанăçне тÿрре кăларса йĕркеллĕ професси илмелле пулнă. Исаак Давидович хăй революциччен Рига тинĕс портĕнче ĕçленĕ. Совет тапхăрĕнче вăрман каснă çĕрте вăй хунă. Çамрăк Аркаша вара шкула мар, театра сукмак такăрлатнă. Райкинсем Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче Ригăран тухса кайнă, Рыбинскра тĕпленнĕ. Аркашăна, вырăнти театр спектаклĕсене хутшăнаканскере, пĕррехинче ашшĕ сцена çинченех туртса антарнă, питĕ вăйлă ятлаçнă. Килте арçын ачана татах лекнĕ. Анчах та театртан арçын ачана никам та сивĕтеймен ĕнтĕ. Кĕçех Аркашăна роль те çакланнă – унăн вилнĕ арçынна евĕрлесе сцена çинче ним хускалмасăр выртмалла пулнă.

Анчах та ашшĕ те шанăçа çухатман-ха. Вăл пĕтĕм вăйне пухса арçын ачана театртан уйăрма хăтланнă, çак тĕллевпе ăна... сĕрме купăс туянса панă. Аркадий вара унăн хупăлчипе çунашка вырăнне усă курнă. Музыка ăна пачах та илĕртмен.

**Выçă вилĕмрен... çу çăлса хăварнă**

13 çулта арçын ача шăнса чирленĕ – çемье ку вăхăталла Петроградра пурăннă. Чир шала кайнине пула ача чутах вилмен. Темиçе уйăх вырăнпах выртнă вăл. Ашшĕ 13-ри ывăлне хулпуççи çине лартса картишне уçă сывлăшпа сывлама илсе тухнă. Сыпăсем ыратнипе утăм та тăвайман арçын ача. Çав вăхăтрах ăна валли ашшĕ-амăшĕ аран-аран тупакан эмелсене ĕçме килĕшмен. Касторка çăвĕ уйрăмах лĕклентернĕ, арçын ача вĕсене шкап хыçне пытарнă. Каярахпа блокадăра, шкапа вутă вырăнне усă курма арктатнă чух, тухнă çав кĕленчесем. Выçăпа асапланса çитнĕскерсемшĕн чухах пулнă хайхисем. Чăн та, Аркадий ашшĕне блокада çапах та вĕлернĕ. Исаак Давидовича Ленинградран Пурнăç çулĕпе илсе тухнă. Арçын, тахçанах йĕркеллĕ çисе курманскер, госпитальте хăйне ирĕке янă. Организм çакна чăтайман. Амăшĕ вара чĕрĕ юлнă, Аркадий ăна каярахпа май пур таран упрама тăрăшнă...

**Биографири “шурă пăнчă”**

Шкул хыççăнах Аркадий Райкин тĕп хулари артистсене курас ĕмĕтпе хĕмленнĕ. 1928 çулхи çуркунне вăл Мускава çул тытнă. Çакăнта унăн биографийĕ пĕр çулталăкла таталать. Çак вăхăтра вăл Бутырка тĕрминче ларнă иккен. Укçа пулманнине кура каччă концертсене билетсăрах кĕме вĕренсе çитнĕ. Пĕррехинче çапла Правительство мероприятине лекнĕ. Тухнă чухне вара пуринне те пропуск тĕрĕсленĕ. Çапла çакланнă яша тĕпчени – правительство членĕсенчен кам патне пынă унта вăл? Каярахпа вара уголовниксем тапăнса хăшкăлтарнă. Вĕсем Райкин йăлтах органсене пĕлтерсе тăрать тесе шухăшланă. Юлашкинчен аранах тÿрре кăларнă хайхискерне. Чăн та, тĕрмере ларнинчен те усси пулнă – каярахпа вăл юлташĕсене стена урлă калаçма вĕрентнĕ – шаккаса...

**Пĕрремĕш юратуран çемье çуралнă**

Руфь Марковнăна вăл пĕрремĕш хут шкулта вĕреннĕ чухнех курнă. Драма кружокне çÿренĕ май вĕсем кÿршĕ шкулсенче те спектакльсем кăтартнă. Пĕр шкулта çапла чи малти ретре хитре хĕр ача ларнă. Вĕсем ун чухне паллашман-ха, анчах хĕре беретлă чиперккене Аркаша ас туса юлнă. Темиçе çултан вĕсем татах тĕл пулнă – Ленинградри сцена искусствисен техникумĕнче. Каччă хĕре кинона чĕннĕ. Çавăнтах, кино заленче, пĕрлешмешкĕн сĕннĕ. Хĕр шухăшласа пăхма шантарнă. Анчах та тепĕр кунах хăй килĕшнине пĕлтернĕ. Унăн çемйи кăна пулас кĕрÿ кандидатурипе ним тусан та килĕшесшĕн пулман – вĕсем те, Райкин-асли пекех, арçын артиста ăнланма пултарайман. Руфи ашшĕ Ленинградри паллă врач пулнă. Райкин чи малтанах вĕсемпе паллашма килсен ăна киле те кĕртмен. Чухăн студент пуринчен ытла хĕрĕн ама çури амăшне килĕшмен. Савнисем вăрттăн тĕл пулма пуçланă. Каярахпа хĕрĕн тăванĕсен çырлахмалли кăна юлнă. Çамрăксем 1935 çулта пĕрлешнĕ. Çамрăк упăшка арăмĕ патне пурăнма пĕр чăматанпа пынă. Çав вăхăталла Райкин ятне артистсен хушшинче пĕлекен пулнă. Хунямăшĕпе кăна пĕр чĕлхе тупайман вăл. Çемьене пĕр пус та илсе кĕмен кĕрÿшне хĕрарăм хуçалăхра та пулин ĕçлеттерме тăрăшнă, лешĕ вара репетицисенче çухалнă.

**Чунри асап кăвак çÿç пĕрчисем хушнă**

1937 çулта арçын чĕрепе аптранă – вăл питĕ нумай ĕçленĕ, унсăр пуçне килти хирĕç-тăру унăн чунне кăшланă. Сывалас шанăç та юлман. Çавăн чухне Райкинăн çÿç пайăрки кăвакарнă та – 26 çулта! Анчах Аркадий пурăнмах тапаланнă. Кĕçех вĕсен хĕр ача çуралнă. Черетлĕ хут хунямăшĕпе хирĕçнĕ хыççăн Аркадий ачине илнĕ те амăшĕ патне тухса кайнă. Арăмĕ киле таврăнсан мĕн пулса иртнине пĕлнĕ те пĕр шухăшласа тăмасăр упăшки хыççăн тухса утнă. Кĕçех çамрăксене уйрăм хваттер панă. Вăтăрмĕш çулсемшĕн ку пысăк ăнăçу пулнă. Çак коммуналкăра Райкинсем нумай çул пурăннă. Çавăнпа та унăн нумай сăнарĕн хăйне евĕрлĕхĕнчен тĕлĕнме кирлех мар-тăр.

Рома, Райкин мăшăрне çапла чĕннĕ, упăшкинчен ниçта та юлман. Гастроле те пĕрлех çÿренĕ. Вăрçă пуçлансан та фронтри концертсене мăшăрĕпе пĕрле çÿренĕ вăл. Катьăна çак вăхăтра Ташкентра ют хĕрарăмсем пăхнă. Лешĕ хĕр ачана йĕркеллĕ пăхман, Райкинсем ярса паракан укçапа хĕрарăмăн вăрçа каяссинчен пытанса пурăнакан упăшкипе ывăлĕсене тăрантарма усă курнă. Катя чутах выçса вилмен. Юрать ашшĕ-амăшĕ ăна вăхăтра илсе кайнă.

**Туйăм вылявĕ**

Мăшăрне тем пек юратсан та Аркадий юлашки вăхăтра хĕрарăмсем патне туртăнма пуçланă. Çут çанталăк çапла илĕртÿлĕх панă ăна – мĕн тăвăн? Пултарулăх çыннине çакă, туйăм вылявĕ, тепĕр тесен, вăхăтран вăхăт кирлĕ пулнă. Райкин вилнĕ хыççăн кăна уçăлнă хăш-пĕр хутшăну. Сăмахран, Миниатюрăсен театрĕн актриси Тамара Кушелевская хăйсен çыхăнăвĕ çинчен каласа кăтартнă. Райкин пуçне çухатса ун хыççăн чупнă-мĕн. Анчах та çакăн пек çыхăнусем яланах тенĕ пек пĕр пек вĕçленнĕ – арçыннăн туйăмĕсем питĕ хăвăрт сивĕннĕ. Çемьешĕн хăрушă чикĕ урлă нихăçан та каçман вăл. Пĕр хĕрарăмсăр пуçне...

**“Чи хитре актрисăсен упăшки”**

Вахтангов ячĕллĕ театр актриси Гарэн Жуковская питĕ илемлĕ пулнă. Унпа Александр Вертинский, Михаил Жаров, Людмила Целиковская тата ыттисем туслă пулнă. Гарэншăн нумайăшĕ пуç çухатнă. Жуковская паллă авиаконструктора Александр Микулина качча тухнă. Арçын маларах та нумай актрисăпа çыхăну тытнă. Çемьере хĕр çуралнă. Вăрçă вăхăтĕнче те Микулинсем выçă ларман. Упăшки урăххипе улталанине пĕлсен Гарэн уйрăлнă. Арçын тÿрех тепре авланнă. Ун пирки “Чи хитре актрисăсен упăшки” теме пуçланă. Гарэн вара Аркадий Исааковичпа тĕл пулма тытăннă. Хутшăнусем шала кĕрессе малтанах никам та шухăшламан пулĕ-ха. Анчах та Райкин çемйине пăрахма та хатĕр пулнă. Руфь Марковна чăтăмасăр макăрнă. Гарэн Константиновна малтан тăна кĕнĕ. “Халĕ эсĕ вĕсенчен ман пата чупатăн. Уйрăлсассăн – ман патран вĕсем патне”, – тенĕ. Çапла хутшăнусем татăлнă. Каярахпа Райкинсен Костя çуралнă. Çемьере каллех лăпкăлăх вăй илнĕ. Жуковская 95 çула çитиччен пурăннă. Сăмах май, Райкинпа иккĕшĕн хутшăнăвĕ пирки никама та пĕр сăмах та каламан вăл. Унăн çырăвĕсемпе телеграммисене архива “Вăрттăн” тесе паллă туса панă. Вăрттăнлăха 2030 çулччен упрама ыйтнă...

**Çамрăк, хура куç харшиллĕ...**

Тĕрĕссипе, Райкинăн та мăшăрне кĕвĕçмелĕх сăлтав пулнă. 1941 çулта, вăрçă пуçланас умĕн, хĕрарăма Леонид Брежнев килĕштерсе пăрахнă. Хитре-ха ун чухне вăл, хура куç харшиллĕ, çамрăк... Рома, упăшкине юратаканскер, вĕсен хушшинчи çыхăнусене арçынна хисепленипе кăна тытса тăнă. Райкин, пĕртенпĕрре вĕресе кайнăскер, каярахпа Леонид Ильичпа пурнăç тăршшĕпех туслă пулнă.

**Сталин патĕнче**

Влаçпа Райкин хăйне евĕрлĕ хутшăннă. Пысăк пуçлăхсем ăна юратнă, вăтаммисем курайман. 1939 çулта ăна кĕтмен çĕртен Сталин асăрханă. Ку Райкин эстрада артисчĕсен пĕтĕм союзри конкурсĕн лауреачĕ пулса тăнипе çыхăннă. Çакăн хыççăн ăна ертÿçĕ 60 çул тултарнине халалланă концерта чĕннĕ. Анчах Сталин кĕтмен çĕртен хăйне нимĕнле концерт та кирлĕ маррине пĕлтернĕ. Артист урăх вырăнта номер хатĕрленĕ. Хăна çуртне таврăнсан ăна шыранине каланă – Сталин патне каймалла. Çур çĕр иртни виçĕ сехетре! Райкин шăп банкета лекнĕ. Ăна ертÿçĕпе хирĕçсех лартнă. Артист сĕтел хушшинчех темиçе миниатюра кăтартнă, вĕсем Сталина питĕ килĕшнĕ. Çакăн хыççăн вăл пĕтĕм черккене Райкин ячĕпе кăна çĕкленĕ.

1942 çулта Райкин Сталина театра спектакль курма чĕннĕ. Кĕçех хурав çитнĕ – ертÿçĕ пыраймасть-мĕн. Анчах та çак çыру Райкин çемйине репрессисенчен упраса хăварнă.

**Тупăшĕ пур, укçи çук**

Райкин театрĕн ячĕ ÿссех пынă. Унпа пĕрлех, паллах, çемье тупăшĕ те. Райкин пуян çын шутланнă. Брежнев тĕп секретарь пулса тăрсан вĕсене Мускава куçарнă, пилĕк пÿлĕмлĕ хваттер панă. Райкин çапах та нумай ĕçленĕ, вăл гастрольсене тăтăш çÿренĕ. Çавăн чухлĕ укçана ăçта чикнĕ вăл? Банк кĕнекисем те пулман унăн. Райкинсем тулăх пурнăçа кăмăлланă, чаплă тăхăннă.

**Пĕрре кÿренсен...**

Райкин питĕ кÿренекен çын пулнă. Айăпа кĕнĕ юлташĕсене нихăçан та текех çывăха яман. Нумай чухне лару-тăрăва Руфь Марковна уçăмлатнă, театртан кăларса янă артистсене каялла таварнă. Çапах та хутшăнусем нихăçан та малтанхи шайра аталанман.

**Сăмахсăрах ăнланнă**

1975 çулта вара çемьене инкек çитсе кĕнĕ. Руфь Марковна ыйвăр чирленĕ. Сиплев кăштах пулăшнă – хĕрарăм утма пуçланă, анчах та калаçма пуçлайман. Анчах та инкек хутшăнусене татах та çирĕплетнĕ кăна. Мăшăр кашни çулах Ригăна канмашкăн пĕрле кайнă. Тинĕс хĕрринче пĕр-пĕрин хулĕнчен çавăтăнса çÿренĕ. Шăппăн. Сăмах чĕнмесĕр. Вĕсене текех сăмах кирлĕ пулман...

**Хĕрарăм çирĕппрех**

Çапах та Руфь Марковна упăшки хыççăн юлса пурăннă. Райкин сывлăхĕ çирĕп маррине пурте пĕлнĕ-çке. “Таджикистан” кинотеатр çуртне парсан ăна йĕркене кĕртмешĕн нумай тăрăшма тивнĕ. Спектакльсен хушшинче Райкин, вăйран кайнăскер, гримеркăра тăтăшрах та тăтăшрах выртма пуçланă. Вăл халсăрлансах çитсен Джунăна чĕннĕ – Райкин çак сиплевçе шаннă. Тĕлĕнмелле те, анчах та çакă чăнласах пулăшнă.

Юлашки хут больницăна лексен те Райкин шÿтленĕ, малашлăх планĕсене палăртнă. Сыватмăш картишне уçăлма тухсан кĕрĕкпе тата... тапăчкипе тăракан арçынна курсан саваннă. “Кĕрĕк тата тапăчки – ас туса юлмалла-ха куна”, – тенĕ вăл. Мĕнлерех миниатюра хатĕрлесшĕн пулнă-ши вăл?..

/“7 Дней”/.




## «Дарики-Дарики»

«Дарики-Дарики» - серия репеллентных препаратов (крем, спрей, молочко) для защиты детей от укусов комаров, москитов и мошек. В качестве действующего вещества они содержат препарат «IR3535», который обладает отличными репеллентными свойствами и при этом практически не впитывается кожей, а в течение всего времени находится на её поверхности. Раньше при разработке детских репеллентных препаратов производители не могли решить проблему противоречия между эффективностью и безопасностью. Хорошо отпугивающие насекомых средства были небезопасны для детей, а препараты, рекомендованные для малышей, обладали слабым действием. Серия препаратов «Дарики-Дарики» – это уникальное сочетание мягкой, безопасной для детей формулы и высокой эффективности. ***Крем Дарики-Дарики», спрей «Дарики-Дарики», молочко «Дарики-Дарики»*** защищают детей и подростков от укусов насекомых не менее трех часов! При этом не раздражают кожу и не вредят здоровью ребенка!



***На правах рекламы.***


**– Салам, кӳршĕ! Пĕчĕкки мĕнле унта сирĕн?**

**– Пепке лайăхах туять-ха хăйне. Вăт хамăр çывăрса тăранаймастпăр. Çакă вара сывлăха питĕ начар витĕм кӳрет.**

**– Лена мĕнле тата?**

**– Лена вăл – эпĕ! Игоре курсан вара палламастăр та...**

* * *

**– Петров рядовой! Эсир ĕнер каллех эрех ĕçнĕ! Вăт ĕçмен пулсан тахçанах сержанта çитмелле.**

**– Мĕн тăвас манăн сержантпа? Ĕçсен эпĕ хама генерал пек туятăп!**

* * *

**– Атте, эсĕ учительницăна юратса курнă-и?**

**– Паллах.**

**– Вара мĕнпе вĕçленчĕ ку?**

**– Аннӳ пĕлчĕ те сана урăх шкула куçарчĕ.**

* * *

**Бармен:**

**– Сирĕн стакан пушă. Тепре кирлĕ мар-и?**

**– Икĕ пушă стаканпа мĕн тăвас-ха манăн?**

* * *

**Хĕрпе студент ресторан çумĕнчен иртсе пыраççĕ.**

**– Уй, мĕнле тутлă шăршă кĕрет! – тет пике.**

**– Килĕшрĕ-и? – ыйтать студент. – Апла тăк атя тепĕр хут иртсе каятпăр çавăнтан.**

* * *

**“Нивушлĕ пирĕн çуртра тепĕр-и кех Интернет ĕçлемест?“ – савăнсах каять арçын кухньăран катлет шăрши кĕнине сиссе.**

* * *

**– Мĕскер эсĕ Петровпа шашкăлла выляма пăрахрăн?**

**– Пĕрмаях улталаканпа выляс килет-и санăн?**

**– Çук, паллах.**

**– Вăт, Петров та вылясшăн мар.**

* * *

**Парикмахерскинче.**

**– Сирĕн хуняма пур-и?**

**– Çук.**

**Пĕр вăхăтран татах:**

**– Сирĕн хуняма пур-и?**

**– Çук терĕм вĕт.**

**Кăшт вăхăтран каллех:**

**– Хуняма пур-и сирĕн?**

**– Çук терĕм вĕт-ха.**

**Татах вăхăт иртет.**

**– Хуняма пур тетĕр-и-ха эсир?**

**– Турăçăм! Çук тесе миçе хутчен каламалла сире?!**

**– Ан кăшкăрăр. Хуняма тенине илтсенех сирĕн çӳç чăшăл! тăрать те мана касмашкăн меллĕрех.**

* * *

**Ашшĕпе пĕчĕк ывăлĕ ашкăнаççĕ. Диван çинче сиккелеççĕ, кăшкăрашаççĕ. Çакă юлашкинчен хĕрарăма йăлăхтарсах çитерет.**

**– Чарăнăр-ха, – тет вăл. – Мĕн ухмах пек кăшкăратăр?**

**– Эпĕ кăшкăрмастăп, – тет упăшки.**

**– Эпĕ вара ухмах мар, – тет ывăлĕ...**

* * *

**Икĕ арçын калаçать:**

**– Манăн арăм ача кĕтет.**

**– Манăн та.**

**– Эсĕ кама кĕтетĕн?**

**– Хĕр. Эсĕ вара?**

**– Арçын ача.**

**– Мĕншĕн?**

**– Радиопульта пăхăнакан вертолетпа выляс килет...**

***И-ХИ-ХИК***


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89276689713.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru.**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т. 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**28.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. Т. 89370101054.

**29.Керамблок, кирпич.** Т. 378378.

**33.**Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу, щебень,** песок, **керамзит,** бетон, **чернозём,** навоз. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **трав для сенокоса** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**103.Керамблок, кирпич, кольца.** Качественные. Д-ка. Т. 21-36-80.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**134.Кирпич, керамблок.** Заводские цены. Д-ка манипул. Т. 447353.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

### ПРОДАЮ

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**238.Бетон, керамблоки, радиаторы.** Доставка. Тел. 67-14-22.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, **бой кирпича,** к/б блоки. Доставка. Т. 89051974019.

**317.Грамассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**340.Песок,** ОПГС, **щебень,** асфальтную крошку, **торф, навоз;** вывоз мусора. Почасовая работа. Тел.: 89061326378, 484161.

**341.Грамассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

**361.Песок, щебень, гравмассу** - от 5 до 30 тн. в короткие сроки. Недорого. Т.: 8-987-670-14-42, 8-917-678-71-66.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89370144997.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**309.Срочно требуются мастера** отделочных работ. Соцпакет. Тел. 8-963-771-58-89.

**368.Требуются:** сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляется. Оформление по ТК, соцпакет. Тел. /8352/ 37-85-75 /«Альянс-Групп»/.

### СУТАТĂП

**382.**Хăвăр вăйпа сӳтсе илсе каймалли **çурт – 90 тăваткал метр.** Кӳкеç. Т. 89176514873.



«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Çырăнмалли индекс: 11515

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, “Чăваш хĕрарăмĕ”

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@chtts.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

Тираж 9298. Заказ 1952.